Çĕнĕ çулта та пĕрле пулар, туссем!

ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă.
1 (4363) №, 2014, кăрлач, 10

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ХАВАСЛĂ КАНИКУЛ



## Туссемпе вăхăта усăллă ирттертĕм

**Кам ачи-пăчи канмалли куна ан юраттăр? Ун чухне пурте ирĕклĕ-çке! Кирек миçе сехетчен çывăр, урамра выля та чуп. Никам та: «Уроксене пурнăçларăн-и-ха?» – тесе ыйтса канăçсăрлантармасть. Вĕсем çуллахи каникула çав тери кĕтеççĕ-ха, анчах хĕллехине кăмăллаççĕ-ши?**

– Паллах! Эпĕ каникула пĕрре те ахаль ирттермерĕм. Хама килĕшекен кĕнекесене вуларăм, туссемпе йĕлтĕрпе ярăнтăм, шашка-шахматла вылярăм. Компьютер умĕнче вара сахалтарах пулма тăрăшрăм. Чи кăмăлли – килтисем валли апат пĕçертĕм. Эпĕ янтăланине питĕ кăмăлласа çиеççĕ вара вĕсем. «Ывăлăм ӳсет-ха, куллен мĕн те пулин çĕннипе савăнтарать», – тет анне хавхалантарса. Унăн сăмахĕсем савăнтараççĕ мана, – сăмах çăмхине сӳтнĕ май хăпартланчĕ Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш шкулĕн улттăмĕш класĕнче вĕренекен Кузьма Иванов.

Мал ĕмĕтлĕ çамрăк хăйĕн ятне питĕ килĕштерет. Вăл çут тĕнчене киличчен ашшĕн пиччĕшĕ Кузьма вăхăтсăр пурнăçран уйрăлнă.

– Кузьма ят парас ачана. Вăл та ăслă-тăнлă çитĕнтĕр, – тенĕ пурте пĕр шухăшлăн пулса.

Чăн та, Кузьма ашшĕ-амăшĕн тĕрекĕ пулса çитĕнет. Шкулта пур предметпа та «5» паллăпа ĕлкĕрсе пырать. Акă иккĕмĕш чĕрĕке те йăлтах «5» паллăпа вĕçлерĕ. Çитессинче те вĕренӳре яланхиллех пысăк ӳсĕмсем тăвасшăн вăл.

*Элиза ВАЛАНС.*

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

### Хĕл кунĕсем

Хĕллехи кунсем илемлĕ,
Аслă хир юрпа пуян.
Ачасем те пит телейлĕ,
Ав, выляççĕ кăмăлтан.

Акă килчĕ Хĕл Мучи –
Хĕл илемĕн асамçи.
Илсе килчĕ канихвет,
Ăна пире çитерет.

*Наташа МИХАЙЛОВА.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.

* * *

Акă çитрĕ шартлама хĕлле!
Эп каятăп шухă йĕлтĕрпе.
Йĕлтĕр манăн пит аван шăвать,
Хĕллене вăл, ахăр, юратать.

*Ирина ПАНДАКОВА,*
*7 класс.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Çĕн Атикасси шкулĕ.

### Юр çăвать

Юр çăвать, юр çăвать,
Хĕвел çути курăнмасть.
Уй-хир, вărман шуралать,
Пур çĕрте те юр çăвать.

Ача-пăча урамра,
Сăнĕ-пичĕ кулăра.
Çунапа чун каниччен
Ярăнаççĕ ту çинчен.

*Ангелина ВАСИЛЬЕВА,*
*4 класс.*

Комсомольски районĕ,
Шурут шкулĕ.

ХАСТАРСЕМ

## Ĕмĕтлĕ çын – çунатлă

**Вăрмар районĕнчи Мăнçырма шкулĕн улттăмĕш класĕнче вĕренекен Таня Аверьяновăпа Инна Романова – уйрăлми туссем. Вĕсенче пĕрпеклĕх питĕ нумай.**



Çут çанталăка юратнисĕр пуçне сăвă шăрçалама, кĕнеке вулама çав тери ухута. Чĕр чунсемшĕн каçса каяççĕ, вĕсем валли аслисемпе пĕрле сырăш ăсталаççĕ, çуркунне вара шăнкăрчсене те савăнтарма манмаççĕ. Спортра та хастар улттăмĕш класра пĕлӳ илекенскерсем. Баскетбол, волейбол вăййисенче пĕрре мар ӳсĕм тунă.

– Сăвă шăрçаланă чухне те хамăр пурнăç епле хаваслă иртнине палăртатпăр, туссене те хамăр пек пулма чĕнсе калатпăр, – теççĕ уйрăлми туссем кулкаласа.

Хĕр ачасем кĕçĕн класра вĕреннĕ чухне «Тетте» журнала алăран яман пулсан, халĕ «Тантăш» хаçатпа çав тери туслă. Хăйсен хайлавĕсем юратнă кăларăмĕнче кун çути курсан мĕн тери хĕпĕртеççĕ вĕсем!

Çук, хĕр ачасен ĕмĕтĕнче писатель, журналист ĕçĕ мар. Ирина психолог, Таня стоматолог профессисене суйласа илсе Тăван çĕр-шыва юрăхлă çын пуласшăн.

– Ĕмĕтлĕ çын ялан çунатлă-çке вăл, – теççĕ вĕренӳ отличникĕсем.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Юрлама, ташлама хавхалантараççĕ

Тăван шкулта хаваслă та асра юлакан пулăм иртессине кашни пĕлнĕ. Унта пурте ситме ăнтăлнă. Уçă урока вара 3, 4, 5 тата 6 класс ачисем йышлăн пуçтарăнчĕç. Уява йĕркелесе яракансем хушшинче Чăваш наци Конгресĕ çумĕнчи хĕрарăмсен «Чăвашлăх управçи» пĕрлешĕвĕн ертӳçи, Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Нина Ивановна Дмитриева тата Шупашкарти ветерансен пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕ Михаил Матвеевич Матвеев пулчĕç.





Тĕл пулăвăн сумлă хăни – «Кăмăл» çемье ансамблĕ те çитнĕ уява. Çак çемьере ăшă пиллĕ аннесем, пултаруллă арсем. Чăваш юрри-кĕввине, ваййи-ташшине аталантараççĕ, упраççĕ, халăхра сараççĕ вĕсем. Ачисемпе мăнукĕсене мĕн пĕчĕкрен халăх юрри-кĕввин илемне туйма хăнăхтараççĕ, хăйсемпе пĕрле пултарулăх ĕçне хастар хутшăнтараççĕ.

Патшалăх Канашне янă çырура республика пуçлăхĕ Михаил Васильевич Игнатьев чăвашлăха сыхласа хăварасси чи пысăк ĕç пулнине палăртать. Тăван культурăна аталантарасси, упраса хăварасси чи малтан çемьерен, шкултан пуçланнине палăртать республика Пуçлăхĕ.

Уява йĕркелеме чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Людмила Викторовна Никифорова самаях тăрăшнă. Педагог çавăн пек концертсене пĕрре кăна мар ирттернĕ. Халĕ те малаллах талпăнса ĕçлет. Вăл пуçарнипех ĕнтĕ «Кăмăл» çемье ансамблĕ шкула çитсе ачасене хăйĕн пултарулăхĕпе тыткăнларĕ. Ансамбль ертӳçи – Дина Николаевна Кудряшова репертуара халăх кăмăлне каякан çĕнĕрен те çĕнĕ юрăсемпе ташăсем кĕртме тăрăшать, унсăр пуçне республикăри чылай шкула çитсе тĕл пулусем йĕркелет. Паян ушкăн Абрамовсен тата Кудряшовсен çемйисенчен тытăнса тăрать. Вĕсен йышĕнче чи кĕçĕнни – 5 çулхи Дионис Егоров, унран аслăраххисем вара 4-мĕш тата 7-мĕш класра вĕренекен Димăпа Олеся Абрамовсем.

– Эпир ансамбле кăмăлласах çӳретпĕр, юрласа ташлани пире вĕренӳре те самаях пулăшса пырать, – теççĕ вĕсем. Савăнăçлă туйăм тĕрлĕрен çитĕнӳ тума, шкулта лайăх вĕренме тата ырă çын пулма хистет. Шкул ачисем çамрăк артистсене куç илми пăхса, сăнаса ларчĕç. Ара, вĕсенчен те чылайăшĕн çак маттурсем пек пулас килет-çке. Ансамбль юрри-ташши куракансене тыткăнлать, савăнтарать, чуна уçать. Кашни юрă хыççăн тăвăллăн алă çупса хавхалантараççĕ артистсене вĕренекенсем. Ах, епле илемлĕ ташлаççĕ вĕсем, юррисем вара чуна тыткăнлаççĕ! Çав тери маттур та хавалтă. Тăван чĕлхене чунпа туйма вĕрентеççĕ, йăла-йĕркене хаклама, юратма хăнăхаççĕ вĕсем. Юррисем чĕре патне çитеççĕ, чуна уçаççĕ, ташшисем хăват параççĕ. Сцена çине чи кĕçĕннисем тухсан – пурин те юрлас, ташлас килет.

***Алексей ТОРГОВЦЕВ.***

**Сăн ӳкерчĕксенче:** «Кăмăл» çемье ансамблĕ.

Шупашкар,
49-мĕш шкул.

## Çитĕнӳ тăрăшуллисене юратать



Пултаруллă ача пур ĕçе те хастар хутшăнать. Иртнĕ çул республика Пуçлăхĕн стипендине илсе тăнă Димитрий Ильин пирки те çаплах калас килет. Ĕçне тавиччен тĕплĕн шухăшлама хăнăхнăскер хавхалану укçин пĕр пусне те тĕкĕнмен-ха, унпа тĕллевлĕ усă курасшăн. Çитĕнӳ тăрăшуллисене юратать. Муркаш районĕнчи Юнкă шкулĕн вуннăмĕш класс каччи республика шайĕнчи чылай конкурсра çĕнтерсе нумай Хисеп хутне тивĕçнĕ. Тĕслĕхрен, техникăна юратаканскер авиа моделированипе тăтăшах малти вырăна тухать. Хăйĕн чун киленĕçĕпе сыхăннă тĕрлĕрен литература вуланăран кăткăс машина та пухма тата сӳтме пĕлет вăл. Водитель правине илсе руль умне ларма ĕмĕтленет. Кашни каччăн машинăпа çӳреме пĕлмелле тесе шутлать. Тĕрĕсех те пуль. Ĕлĕк яшсене лашине пăхса хакланă пулсан, халĕ вара – хурçă урхамахне кура. «Пурнăçра темле ларутăру та сиксе тухма пултарать. Тен, кама та пулин васкавлăн сыватмăша çитермелле? Çавăн пек самантсенче вăл питĕ кирлĕ», – тет Дима.

Физкультура, информатика тата пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕ предмечĕсене юратаканскер спортпа та туслă. Республикăри хоккей тата футбол ваййисенче Муркаш команди виççĕмĕш вырăна тухнă. Дима çав йышра. Районти технологи олимпиадинче те малтисен шутĕнче вăл.

Пушă вăхăт тупăнсанах каччă пулла çӳрет. Хăшĕ-пĕри пек выçă куçланса сĕрекепе сĕрмест вăл. Çуллахи вăхăтра вăлта çеç пултăр, путаркăçпа хулкка та кирлĕ мар – шăрчăкĕсен сывăхрах сиксе çӳреççĕçке. Вăлтана юхан шыва ятарăн кăна, пулăсем çекĕл çинчи хурт-кăпшанка тапăнаççĕ те хăйсем капкăна çакланаççĕ. Дима тытнă чи пысăк пулă – партас – çур метра яхăн. Çапла вăхăта иртерме питех те кăсăклă, çут çанталăка та ытлашши сăтăр тумастăн. Хĕлле вара урăхларах. Малтанах пăр катмалла та унти юшкăна вăрăм патакпа пăтратмалла, çиеле тухнă хĕрлĕ хуртсем шăпах пулă тытма кирлĕ пулĕç.

Дима яланах пиччĕшĕнчен тĕслĕх илме тăрăшать. Çартан таврăнсан вăл çар ĕçĕпе Шупашкарта ĕçе вырнаçнă. Ялта пĕр тăвансене мухтаççĕ, ырă сăмахпа хавхалантараççĕ. Дима та пурнăçра хăйĕн çулне тупĕ, иккĕленместĕп.

***Лариса ПЕТРОВА.***

## Паллă юрăçпа тăван-ши вăл?

«Любэ» ушкăнра юрлакан Николай Расторгуева пĕлмен çын çук пуль. Çак шкулти çиччĕмĕш класра вĕренекен Леньăна курсан паллă юрăçăн тăванĕ мар-ши тесе те шухăшласа илтĕм. Сăнран пĕр пеклĕх пур пек туйăнать. Çитменнине, хушамачĕ те пĕрешкелех. Анчах йăнăшатăп иккен. Хушамачĕсем те ăнсăртран кăна пĕр килеççĕ. Юрăç пулмасан та шкулти тата районти тĕп шахматист вăл халь. Шашкăлла выляма ашшĕнчен вĕреннĕ, шахматла вара – аслашшĕнчен. Математикăна юратаканскершĕн задача шутласси нимĕнле йывăрлăх та мар. Çак предметпа тата общество пĕлĕвĕпе районта иртнĕ олимпиадăсенче малти вырăнсене тухнă. Леня ĕлĕкхи пурнăçпа питĕ кăсăкланать. «Иртнине пурин те пĕлмелле», – тесе шутлать вăл. Çавăнпа ăна истори урокĕ те питĕ килĕшет. Çак темăна сыхăннă тĕрлĕ литературăпа паллашма вара питĕ хавас.

«Тăрăшуллă ача вăл, пур предмета та юратса вĕренет, тĕрлĕ конкурсра çĕнтерет. Шăшкăлла выляса тăтăшах пĕрремĕш вырăна тухать», – тет шкул директорĕн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ Мария Витальевна Сидорова.

Арçын ачан аслашшĕпе асламăшĕ тата кукамăшĕ шкулта вĕрентекен пулса ĕçленĕ, кукашшĕ Çĕмĕрле районĕн пĕр хуçалăхне ертсе пынă, ашшĕ – инженер, амăшĕ – экономист. «Мĕн акатăн, çав шăтать», – теççĕ халăхра. Çиччĕмĕш класра вĕренекен Леня Расторгуев пирки те çаплах калас килет. Тăваттăмĕш класри шăллĕ те вĕренӳре малтисен ретĕнче, ăста шахматçă.

Вăр-вар ача нимĕнле ĕçе те пайласа тăмасть, ăна тепри пурнăçласса та кĕтмест – урай та, чашăк-тирĕк те çăвать. Çавăн пек маттур ывăл ӳснĕшĕн ашшĕ-амăшĕ епле ан савăнтăр ĕнтĕ?

Çуллен-çул ялта çын шучĕ сахалланса пырать. Ытларахăшĕ хулана кайма ĕмĕтленет. Леня çак лару-тăру пирки час-часах шухăша путать. «Кунта пурăнма лайăх, сывлăшĕ таса, вăрман юнашарах, хулари пек машина нумай мар. Ял пурнăçне пĕтерес мар тесен ĕç вырăнĕсем тумалла, – тет вăл. – Эпĕ депутат пулас тăк чи малтанах тăван ялăма пулăшăттăм».



***Лариса ПЕТРОВА.***

Етĕрне районĕ,
Мăн Явăш шкулĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13,
VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
В.СТЕПАНОВ

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2328 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 13
Пичете кăрлач уйăхĕн 9-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.tst.smi21.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Асрах хĕллехи каникул

МАНĂÇМИ КУНСЕМ

## Каникулта та вĕрентĕмĕр. Ытларах вара кантăмăр

***Акă Çĕнĕ çула та кĕтĕмĕр. Шкул ачисемшĕн хаваслă тапхăр – каникул – вĕçлениччен шутлă кунсем юлчĕç. Кашнийĕ çак савăнăçлă саманта тĕрлĕрен ирттерет. Хăшĕ-пĕрин, ахăртнех, йытă хăваласа çÿреме вăхăчĕ те пулман. Кунĕ-кунĕпе тăвайккирен ярăнакансем те урокĕсем пирки манман пулĕ. Ара, каникулта кĕнекесем вуламалла-çке. Патшалăх экзаменĕсене тытма хатĕрленекенсен пушшех. Канмалли кунсенче те çанă тавăрсах вĕренмелле. Библиотекăна çул тытмалла... Килте ĕç тумалли те пайтах. Шкул ачисем каникула еплерех ирттернĕши? Çак ыйтăва тĕрлĕ шкулта, тĕрлĕ класра вĕренекенсене патăм.***



**Оля МИХАЙЛОВА,** Патăрьел районĕ, Нăрваш Шăхаль,14 çулта:

– Каникулта алă усса ларма вăхăт çук. Кану вăхăтĕнче те вĕренмелле. Килте ĕç тумалли ытлашшипех те. Акă тĕрлĕ предметпа сочинени çырма, задача шутлама парса янă. Унсăр пуçне кĕнеке нумай вуламалла. Чылайăшне Интернетран тупатăп. Шкула кайма та манмалла мар, экзаменсене хатĕрленмешкĕн тĕрлĕ факультатив занятийĕсене çÿремелле. Çапах та каникула алра кĕнеке тытса çеç ирттереймĕн çав. Кашни кунах юлташсемпе курнăçма тăрăшрăм, пĕринче вĕсемпе район центрне çул тытрăмăр. Кунта ачасем валли каток пур. Конькипе чун каниччен ярăнтăмăр.



**Лариса НИКИТИНА**, Шупашкар, 64-мĕш шкул, 15 çулта:

– Ытларах чухне ачасем пушă вăхăтра, каникулта кунĕ-кунĕпе компьютер умĕнче лараççĕ. Эпĕ вара çак вăхăтра яла çул тытатăп, аслисене хуçалăхра пулăшатăп. Ялта лайăх. Тусюлташсемпе уçăлса çÿреме те кăмăллă.



**Андрей СУХАРЕВ**, Патăрьел районĕ, Нăрваш Шăхаль, 14 çулта:

– Хĕллехи каникулта тĕп хуламăра, Шупашкара, кайрăм. Вăхăта пустуй ирттермерĕм темелле. Кинотеатра интереслĕ фильм курма, кÿлмекри каток çине конькипе ярăнма та, батут çинче сикме те ĕлкĕртĕм. Унсăр пуçне йĕлтĕрпе чупма та вăхăт тупрăм. Каникул усăллă иртрĕ!



**Ангелина КОШКИНА**, Патăрьел районĕ, Нăрваш Шăхаль,13 çулта:

– Кашни каникула интереслĕ ирттерме тăрăшатăп. Хальхинче те кану кунĕсем калама çук кăсăклă, усăллă пулчĕç. Тăраниччен çывăрма май килчĕ. Хуçалăхри ĕçсене туса пĕтерсен асаттепе асанне патне хăнана çÿрерĕм. Вĕсене те пулăшмалла-çке. Кÿршĕ ялта пурăнакан кукамай патне кайма та вăхăт тупрăм. Юлташсемпе уçă сывлăшра уçăлса çÿрерĕмĕр. Каçсерен вара çывăх çынсемпе сенкер экран умĕнче тĕрлĕ интереслĕ фильм куртăмăр. Канмалли кунсенче Шупашкара çитсе курма май пулчĕ. Илемлĕ юр кĕлеткисем, капăрлатнă чăрăшсем, тĕрлĕ тĕслĕ çутăсем чуна савăнăç парнелерĕç. Шел те, хавАслă вăхăт нумая тăсăлмарĕ...

*Ирина КОШКИНА ыйтса пĕлнĕ.*

## Ăмăртура та канура иртрĕç уяв кунĕсем

Володьăпа Леша Торговцевсем – чи çывăх туссем. Мĕн пĕчĕкренех пĕрле выляса ÿснĕ вĕсем, пĕр-пĕринчен инçе те пурăнмаççĕ шăпăрлансем, кÿршĕллĕ çеç. Ку çул та туссем хĕллехи каникулта пĕрле выляса киленчĕç. Шкул ачисем тĕплĕн хатĕрленнĕ Çĕнĕ çула. Кил умĕнче Юр кĕлетке ăсталанă, тĕрлĕ сăрăпа илемлетнĕ. Симĕс чăрăшне юнашар вырнаçтарнă, теттесемпе, гирляндăпа капăрлатнă. Кашни килен-каян çак илеме курса киленет, ăмсанать, кăмăлне çĕклет. «Ай тур-тур, кам ăсталанă-ши кăна? Мĕнле хитре, алли-ури ылтăн, çитменнине ÿркенмен çапла тума», – тесе хăпартланаççĕ Анат Туçасем. Ачисем чăнах та пултаруллă, Володя– 8 класра, Леша 5-мĕшĕнче вĕренеççĕ. Иккĕшĕ те тăрăшуллă вĕренеççĕ, пысăк çын пулма ĕмĕтленеççĕ.



**– Леша, эсĕ канмалли кунсене епле ирттеретĕн?**

– Эпĕ хĕлле йĕлтĕрпе, конькипе ярăнма кăмăллатăп. Юлташсемпе хоккейла выляма, уçă сывлăшра уçăлса çÿреме, тĕрлĕрен вăйă-викторинăна килĕштеретĕп. Пушă вăхăтра интереслĕ кĕнекесем вулама, кил таврашĕнче атте-аннене пулăшма яланах хатĕр. Çемйипех физкультурăпа спорт комплексĕнчи бассейна шывра ишме çÿретпĕр. Мана унта питĕ килĕ-шет. Спортпа туслă пулни сывлăхшăн усăллă.

**– Çитес вăхăтра мĕн тума шухăшлатăн-ха эсĕ?**

Халĕ туссемпе кашни кун тенĕ пекех тăвайккинчен çунашкапа ярăнатпăр. Питĕ хавАслă унта пире. Çавăн пекех шкулти тĕрлĕ кружок секцийĕсене те кăмăлласах çÿретпĕр: ташлатпăр, вылятпăр, юрлатпăр, савăнатпăр.



**– Апла пулсан ахаль ларма вăхăт çук?**

– Çапла.

**– Володя, саншăн вара куникул мĕнпе асра юлчĕ?**

– Эпĕ мĕн ачаранпах юрлама юрататăп. Юрлани манăн кăмăла çĕклет.

**– Эс кашни уявра хăвăн юррусемпе халăха тыткăнлатăн теççĕ.**

– Çапла, ялан юрлатăп. Чун ыйтнине пурнăçлас килет, уншăн вăхăта шеллемелле мар.

Çĕнĕ çула та юрласа кĕмелле теççĕ, вара çулталăкĕпех ăнса пырать имĕш. Çитес вăхăтра йĕлтĕрçĕсен чупасси ял ăмăртăвĕ иртет. Тахçантанпах кĕтсе пурăнатпăр çакна.

**– Çĕнтерес килет-и?**

– Паллах.

**– Ăнăçу сунатăп. Çĕнтермелле пултăр.**

– Тавтапуç.

Саккăрмĕш класра вĕренекен Елена Перепелкина вара тантăшĕсемпе пĕрле тĕлĕнмелле уяв йĕркеленĕ. Вĕсем канмалли кунсенче черетпе кашнин патĕнче ташласа-юрласа киленеççĕ. Питĕ хавАслă тет. «Харпăр хăй тĕллĕн ларни мар, пĕрле пуçтарăнни паха», – пĕлтерет Лена. Çавăн пекех ял библиотекине кĕнеке вулама çÿрени, тĕрлĕрен вăйă-конкурса хутшăнни кăмăла çĕклет.

*Алексей ТОРГОВЦЕВ.*

## Çĕн Атикассисем епле канаççĕ?

Тин кăна Марина Охтярова пĕлÿ çурчĕн алăкне уснăччĕ. Вĕренÿ кăткăслăхĕ илĕртме пуçланăччĕ кăна, шкул ачи пурнăçĕнчи чи асамлă, юмах евĕр каникул та çитрĕ. Нихçан тунсăхлама пĕлмен хĕр ача яланах хăйне валли ĕç тупать. Çавăнпа хĕллехи хавАслă кану кунĕсем те уншăн сутă та савăнăçлă иртеççĕ. Пĕр çитменлĕх çеç кăмăла пăсать: шкулта ача нумай, ялта вара... Юрать-ха, Маринăн аппăшĕ Оля пур. Иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ Дима тата шăллĕ Саша килсенех тăвансем тĕрлĕ вăйă выляççĕ, çунашкапа ярăнма çÿреççĕ. Унсăрăн мĕнле хĕл пултăр-ха вăл?



Маринăн амăшĕ, Ирина Геннадьевна, ача чухне «Тантăшăн» кашни кăларăмне юратса вуланă. Халĕ те хаçата алла тытсанах: «Кунта вуламалли тем те пур-çке!» – тет те «шĕкĕлчеме» тытăнать. Акă Марина та вулама вĕренчĕ ĕнтĕ, çавăнпа кăçалхи пĕрремĕш номере чăтăмсăр кĕтет вăл. Килтисем пепкисене ачасен юратнă хаçатне кашни çул çырăнса параççĕ.

Вĕренÿре хастарлăхпа палăракан ача каникулта та вăхăта сая ямасть. Вуннăмĕшĕнчи Марина Чангайкинăнах илер акă. Тăрăшулăхне пула ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕн Н.В. Маловăн стипендине тивĕçнĕскер ялан малтисен ретĕнче пулма тăрăшать. Спортпа туслă пике каникулта та шкулаваскать, пĕр шухăшлă тантăшĕсемпе кунта тĕрлĕрен ăмăртăва хатĕрленеççĕ вĕсем. Шупашкара Олимп çулăмне курма кайса килнĕ хыççăн хавхаланăвĕ татах та ÿснĕ. Паллă спортсменсем те пулăс-çке унта. Вĕсене çывăхран курни мĕн тери паха!

«Çак кунсенче Хĕрлĕ Чутайра волейболла вылярăмăр, пирĕн команда иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ», – пĕлтерчĕ Марина.

*Лариса ПЕТРОВА.*



Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Çĕн Атикасси шкулĕ.

# Хастар кадетсем

## Пĕрремĕш çитĕнӳ пур

Вăрнар районĕнчи Калинино шкулĕн çиччĕмĕш кадет класĕнче вĕренекен Евгений Крылов кукашшĕ пекех паллă çын пулма ĕмĕтленет. Вăл хăй вăхăтĕнче хастарлăхне кура Тăван çĕр-шывăн пысăк наградине Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне тивĕçнĕ-çке.

– Тракторист пулнă манăн кукаçи. Çавна пула вăл халăха мĕнпе кăна пулăшман-ши? Колхоз ĕçĕнчен пĕр кун та юлман. Шаннине пĕтĕм кăмăлтан пурнăçланă. Пĕлетĕр-и, питĕ канăçсăр ĕç вăл руль умĕнче ларасси. Ларса-тăма вăхăт çук. Çапах та питĕ интереслĕ, кăмăллатăп эпĕ унашкаллине. Ку сăмахсене ахальтен каламастăп, мĕншĕн тесессĕн çуллахи вăхăтра хам та трактор çинчен анма пĕлместĕп. Кукаçиех хывнă пуль çав. «Улми йывăççинчен аякка ӳкмест», – тесе каланă ваттисен сăмахĕпе йăлтах килĕшетĕп. Пĕррехинче вĕрентекен ирĕклĕ темăпа сочинени çырма хушрĕ. Эпĕ вара тӳрех кукаçи пирки шăрçалама тытăнтăм. Тĕрĕссине калатăп, çырма юратнăран тата техникăна кăмăлланăран пĕчĕк калав мĕн тери ăнăçлă пулса тухрĕ! Тепĕр урокра вĕрентекен те ырларĕ, вĕренекенсен умĕнче пурте илтмелле вуласа пачĕ те: «Сирĕн, ачасем, Женьăран тĕслĕх илмелле», – терĕ мана пушшех хавхалантарнă май, – тет Женя хăпартланса.

Вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракан арçын ача ытти ăмăрту-конкурссенче те хастар. Шкул чысне хӳтĕлесе пĕрре мар çитĕнӳ тунă.

Çут çанталăк тусĕ тесе шутлать хăйне арçын ача. Уйрăмах тавралăх симĕс тум тăхăннă вăхăта кăмăллать.

– Пурне те юрататăп эпĕ: çĕр тăрăх чупакан кăткăсене те, çанталăк илемĕпе киленсе вĕçекен лĕпĕшсене те, йывăç çинче чĕвĕлтетсе ларакан кайăкĕсене те, хĕвел питтинче хĕртĕнсе выртакан кушаксемпе йыттисене те, картишре кăтăкласа çӳрекен чăхсемпе чĕпписене те... Çуркуннесерен шăнкăртатса юхакан шыв кĕрлевĕ те, çилпе кашласа ларакан вăрман шавĕ те кăмăла çĕклеççĕ. Çулла вара пĕве хăй патне туртать. Пулăра темччен ларатăп вара хăш чухне. Çак çĕр çинче мĕн тери телейлĕ эпĕ! Юнашар аттепе анне, пиччепе аппасем пуртан. Вĕсем пурнăçра яланах пулăшса тăраççĕ мана, кĕçĕнни пулнă май вĕсен юратăвĕ йăлтах мана лекет, – тет арçын ача кăмăллăн.

Кадет класĕнче вĕренме тӳр килнишĕн питĕ хĕпĕртет Женя. Педагогсем çирĕп ыйтни те унăн кăмăлне каять.

– Халех çар пурнăçне хăнăхни хамăршăнах усăллă. Кайран çакă пире йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшса çеç пырĕ. Авă, 2012 çулта пирĕн шкулăн кадет ачисем «Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе 67 çул тата 1812 çулхи Тăван çĕр-шыв вăрçинчи çĕнтерĕве 200 çул çитнине халалланă «Стройпа юрă смотрĕ. Çĕнтерӳçĕсен маршĕ» Пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Эпир те халĕ пысăк тĕллевпе пурăнатпăр. Мухтанмалăх çитĕнӳ тума ĕлкĕртĕмĕр-ха, иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Мускаври «Тăван çĕр-шыв ывăлĕсем» организаци ертӳçисем Сĕнтĕрвăрри хулинче иртнĕ республика шайĕнчи ăмăртура иккĕмĕш вырăна тухрăмăр. Çавăнпа пирĕн-шĕн тăрăшакан педагогсене, Лев Николаевичпа Татьяна Павловна Ефимовсене тем пысăкăш тав сăмахĕ калатпăр. Вĕсем пире ăс парса та вĕрентсе, хавхалантарса тăмасан нимĕнле çитĕнӳ те пулас çук, – палăртрĕ хăй шухăшне мал ĕмĕтлĕ Женя.

Женя сăмахĕсемпе унăн çывăх юлташĕ, пĕр класра вĕренекен Коля Ситников та килĕшет.

– Хăвăртрах алла аттестат илсе аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕрес килет. Пысăк çын пуласчĕ. Ун чухне, алла укçа тытма пуçласан, килтисене те пулăшма пулать, – тет вăл шухăша путнă май.

Коля та вĕренӳре, спортра хастар. Пăхмасăр сăвă, калав вуласси лайăх пулать унăн. Ахальтен мар Вăрнарта иртнĕ проза ăмăртăвĕнче малти вырăна тухнă вăл.

Пĕр-пĕриншĕн тăрăшакан туссем ӳссен юрист пулас тĕллевлĕ.



## Йывăрлăха çĕнтерсе



Канаш районĕнчи Çĕнĕ Аччара пурăнакан Катя Егорова малтан кадетсем пирки илтнĕ-ха, анчах хăй ун пек класра вĕренетĕп тесе нихăçан та шутламан.

– Анне хĕтĕртнипе Янкăлч шкулне çитрĕм. «Кадет класĕнче ăс пухса, ман шутпа, çитĕнӳ тума вĕренетĕнех», – терĕ вăл пĕр кунхине. Малтанлăха шухăша путрăм. Пытармастăп, йывăрлăха кĕрсе ӳкесрен питĕ хăрарăм. Апла пулин те хама алла илтĕм, анне сĕнĕвне шута илсе кадет пулса тăтăм. Вĕрентекенсем вара пирĕншĕн мĕн тери тăрăшма тытăнчĕç. Уннчен стройпа утса курманскершĕн, маншăн, çăмăллăн иртместчĕ çав кашни кунхи тренировка. Вĕрентсен упа та ташлама вĕренет тет те, эпĕ те пĕтĕм йывăрлăха çĕнтерме пултартăм. Арçын ачасенчен юлас мар тесе мĕн тери тапаçлантăм. Сĕнтĕрвăрри хулинче иртнĕ республикăри кадетсен ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна тухса пурне те тĕлĕнтертĕмĕр. Пирĕншĕн мен тери савăнăç пулчĕ! Хĕпĕртенипе пĕр-пĕрне ыталаса саламларăмăр, малашне те хастар пулма сăмах паратăмăр, – тет Катя мăнаçлăн.

Кашни кун килне çӳремест хĕр ача. Янкăлчри кукамăшĕ патнех çĕр выртма юлать. Канмалли кунсенче вара тăван килне васкать.

– Кукамăйпа пурăннăран унăн ăса вĕрентсе каланă сăмахĕсене яланах асра тытатăп, – тет çиччĕмĕш кадет класĕнче пĕлӳ илекен хĕр ача хавхаланулăн.

## Пулас офицерсем



– Эпир – чи телейлисем! Мускаври сывлăха çирĕплетекен «Атлант» спорт комлексĕнче иртнĕ «Стройпа юрă смотрĕ. Çĕнтерӳçĕсен маршĕ» хула ăмăртăвĕнчен çĕнтерӳпе таврăнтăмăр. Çав ырă самант пирĕншĕн яланлăхах асра юлĕ. Кадет класĕнче ăс пухма кăсăклă кăна мар, хаваслă та. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнатпăр. Ушкăн ертӳçи Анна Ейкова сăмахĕнчен нихăçан та иртместпĕр. Вăл мĕн калани пирĕншĕн саккун. Е тата пиртен чăн-чăн кадетсем тăвас тесе тăрăшакан Эдуард Васильевич Романова тав сăмахĕ мĕнле каламăн-ха? – терĕç Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хĕрлĕ Чутай шкулĕн саккăрмĕш кадет класĕн вĕренекенĕсем Константин Филипповпа Анна Сармандейкина хăпартланса та савăнса.

Мускаври çитĕнӳ çав тери хавхалантарчĕ çамрăксене. Çавна пулах иккĕшĕ те çар çынни пулма ĕмĕтленеççĕ.

– Ăмăртура офицерсем çине ăмсануллă куççемпе пăхрăм. Вĕсен тумĕсене ытараймасăр. Эпĕ те хăçан та пулин çавнашкал тумпа çӳреме тытăнатăп пулĕ-ха, – хăй шухăшне пĕлтерчĕ çав самантрах вĕренӳре «5» паллăпа кăна ĕлкĕрсе пыракан Костя.

– Мана та Мускавра йăлтах килĕшрĕ. Инçе çула анне пилпе ăсатрĕ ун чухне: «Аслисен сăмахĕнчен ан иртĕр. Çу çулĕпе кайăр та, пыл çулĕпе каялла таврăнмалла пултăр. Сире çĕнтерӳпе кĕтетпĕр», – терĕ ман çине ăшă куçĕпе пăхнă май. Чăн та, анне пилĕ çитрĕ вĕт. Эпир чи маттуррисем пулса тăтăмăр, – пуплерĕ Анна та хавхаланулăн.

...Çамрăксен чи юратнă предмечĕ – биологи. Çавăнпа Елена Николаевна Орлова урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтеççĕ вĕсем.

– Эпир çут çанталăка çав тери килĕштернипе те çыхăннă пулĕ ку тесе шутлатпăр. Уйрăмах пире ял сĕмĕ килĕшет. Кунта кирек хăçан та уçă сывлăш. Кăмăл пур-тăк хĕллесерен йĕлтĕр сырса вăрмана вĕçтер. Çулла та вăрман хăй патне туртать. Çырла-кăмпа пуçтарма, мăйăр татма хаваспах васкатпăр катана вара. Пирĕн шутпа, ку вăл хăйне евĕрлĕ спорт та шутланать, – теççĕ мал ĕмĕтлĕ Костьăпа Анна пĕр-пĕрне пӳлсех.

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Виртуаллă класс



**_Проектăн иртнĕ (пĕлтĕрхи!) кăларăмĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш шкулĕнче вĕренекенсем юмах ярса савăнтарчĕç те тĕлĕнтерчĕç пире. Штанашсен халап çӳпçи иксĕлмен-ха, ачасен хайлавĕсем çитес кăларăмсенче те пичетленĕç. Паян вара Шупашкарти 10-мĕш шкулти 4 «и» класс хастарĕсем хăйсемпе паллаштарасшăн. Аса илтерер: виртуаллă класăн старости – Натали Сидорова та çак класрах вĕренет. Класс ертӳçи – Н.Р.Григорьева._**

**_Айсан ТЕРМЕН_**

## Паллашăр пирĕнпе!



Эпир тĕп хулари 10-мĕш шкулта вĕренетпĕр. Халĕ ĕнтĕ 4-мĕш класа çитрĕмĕр. 1-мĕш класранпах пирĕн вĕренӳ программи ыттисенчен уйрăлса тăрать. Чăваш чĕлхи урокĕсен шучĕ те ытларах. Малтанах тăван чĕлхене 5 сехет вĕреннĕ, иккĕмĕш класра – 4, халĕ вара – 3 сехет. Кунсăр пуçне тăван тавралăх, физкультура, музыка, ĕç урокĕсенче те чăвашла калаçма тăрăшатпăр. Кану вăхăтĕнче те, ахаль чухне те тăван чĕлхепе хутшăнма вĕренетпĕр. Чăваш чĕлхи урокĕсем питĕ хаваслă, интереслĕ иртеççĕ. Мĕн кăна тумастпăр: илемлĕ тата рольпе вулама, таса та çепĕç калаçма хăнăхатпăр, тĕрлĕ вăйă вылятпăр, юрăсем юрлатпăр, тупмалли юмахсем, сăвăсем пăхмасăр калатпăр. Пуринчен ытларах пире инсценировкăсем лартма килĕшет. Атте-анне пулăшнипе кирлĕ тумсем хатĕрлетпĕр. Шкулти мероприятисенче кăна мар, хула шайĕнче иртекен тĕл пулусене те активлă хутшăнатпăр.

Чăваш чĕлхине юратсах вĕренетпĕр!

***Надежда Романовна ГРИГОРЬЕВА,***
***класс ертӳçи.***

Шупашкар, 10-мĕш шкул.

## Çут çанталăк урокĕ

Маншăн чи интересли – çут çанталăк урокĕ. Урок пуçламăшĕнче çанталăка пĕри чăвашла (сăмахпа) сăнлать, тепри çакна доска çинче ӳкерсе кăтартать. Унтан килти ĕçе тĕрĕслетпĕр, тĕрлĕ темăпа презентаци хатĕрлетпĕр те юлташсене каласа кăтартатпăр. Унтан çĕнĕ темăпа паллашатпăр. Ăна тĕплĕн сӳтсе яватпăр, кашни ачан шухăшне итлеме тăрăшатпăр. Маша Майорова вара чăвашла пуринчен те нумайрах калаçма пултарать. Пирĕн класри ачасем маттур, вĕсем шухăшĕсене тĕрĕс те илемлĕ уçса пама пултараççĕ.

Малалла тетрадьсемпе ĕçлетпĕр. Вĕрентекен пире валли мăшăрпа, ушкăнпа ĕçлемелли тĕрлĕ ĕç хатĕрлет. Эпир вĕсене хаваспах пурнăçлатпăр, заданисене кĕтетпĕр. Пултарулăха урок вĕçĕнче хамăр хак паратпăр, ку вара пире татах та тăрăшма хистет.

***Александр АБДУЛОВ.***

## Физкультура



Сывлăха çирĕплетес тесен спортпа туслă пулмалла. Физкультура урокĕ – юратнисенчен пĕри. Мĕн кăна шутласа кăлармасть Надежда Романовна – пирĕн класс ертӳçи. Кашни урокĕ интереслĕ те хăйне евĕрлĕ. Уйрăмах эстафетăсем хаваслă иртеççĕ. Ушкăнсем малти вырăна тухассишĕн питĕ тăрăшаççĕ. Иртнĕ чĕрĕкре эпир гимнастикăпа туслашрăмăр. Урокра пĕчĕк кавирсемпе усă куратпăр. Вĕсем çинче çĕнĕ хусканусем вĕренетпĕр. Хăнăхтарусем пире маттур, яштака, йăрăс пӳллĕ пулма пулăшаççĕ. Урокра вăйăсем те вылятпăр. Мана килĕшеккеннисем: «Сывлăш, çĕр тата шыв», «Вăтăр виççĕлле» тата «Лапталла».

***Анастасия РОДИОНОВА.***

Эпĕ те сире физкультура урокĕ çинчен каласа парасшăн.

Чи малтан эпир пĕр рете тăрса тухатпăр. Вара тăватă ушкăна пайланса ӳт-пĕве çемçетме пуçлатпăр. Вĕрентекен хăш-пĕр чух хамăр класри ачасене те зарядкăна ертсе пыма ирĕк парать. Эпир чупатпăр, сикетпĕр, пĕр енчен тепĕр енне çаврăнатпăр, алăсене хуçлататпăр, тĕрлĕ хусканусем тăватпăр. Ăшăнса çитсен урок темипе паллашса малалла тăрăшатпăр.

Урокра тĕрлĕ конкурс, эстафета ирттеретпĕр, футболла, баскетболла, волейболла, пионерболла вылятпăр, командăсем хушшинче тупăшатпăр. Чăваш халăх вăййисемпе те паллашатпăр, хаваспах вылятпăр. Хĕлле вара йĕлтĕрпе, конькипе ярăнатпăр.

Физкультура урокĕ питĕ интереслĕ, савăнăçлă иртет. Эпир ăна чăтăмсăр кĕтетпĕр.

***Михаил ПЕРКОВ.***

## Ал ĕçне вĕренетпĕр

Технологи урокĕнче эпир икĕ чĕлхепе калаçатпăр – чăвашла тата вырăсла. Надежда Романовна эпир мĕн тăвассине, мĕнле ĕçлемеллине, пĕччен, иккĕн е ушкăнпа тăрăшмаллине каласа ăнлантарать. Эпир ĕçленĕ вăхăтра класра илемлĕ чăваш юрри-кĕвви янăрать. Урок варринче вĕрентекен кану вăхăчĕ ирттерет. Эпир тĕрлĕ материалтан пукане, шăши, чечек тăватпăр. Çĕлеме, тĕрлеме вĕрентĕмĕр, вĕт шăрçаран сулăсем те ăсталатпăр. Технологи урокĕсем хăвăрт иртеççĕ, мĕншĕн тесен ĕçĕ питĕ интереслĕ, пурне те килĕшет.

***Андрей ФЕДОРОВ.***

## Кĕвĕ ытамĕнче

Пирĕн класс, ыттисемпе танлаштарсан, чăваш чĕлхине тĕплĕнрех вĕренет. Уроксем яланах интереслĕ. Манăн вара чи юратни – кĕвĕ урокĕ. Тĕрлĕ халăхăн юррисене итлетпĕр, вĕсен йăлисене тĕпчетпĕр. Чăваш юррисене пĕрле юрлама тăрăшатпăр. Тепĕр чух пĕри кăна юрлать, ыттисем вара ăна пулăшатпăр. Пирĕн класс концертсене хутшăнать, спектакльсем лартать, ташлама, юрлама, сăвă калама пурте хастар. Кĕвĕ урокĕнчен эпĕ чунпа канса тухатăп. Киле çитсен, микрофон илетĕп те аннене юрласа паратăп. Вăл маншăн питĕ савăнать, чăвашла калаçнине, юрланине, ваттисен йăлисемпе тата халăх тĕррисемпе кăсăкланнине ырлать.

***Натали СИДОРОВА.***

## Тăван чĕлхе

Эпĕ 4-мĕш инновациллĕ класра вĕренетĕп. Физкультура, музыка, технологи, рисовани, çут çанталăк урокĕсем икĕ чĕлхепе – чăвашла тата вырăсла иртеççĕ.

Класри ачасем пурте хуларан, шкула киличчен чăвашла пĕр сăмах та пĕлмен. Халĕ пурте чăвашла шакăртаттарса калаçаççĕ. Ачасене анчах мар, ашшĕ-амăшне те килĕшет ку меслет.

Эпир чăвашла сăвăсем, калавсем вулатпăр, спектакльсем те лартатпăр. Пирĕн класс ачисене час-часах телевидение, радиона чăваш передачисене хутшăнма йыхравлаççĕ. Литература музейне те тухса çӳретпĕр, писательсемпе тата поэтсемпе тĕл пулатпăр.

Чăваш чĕлхи пирĕншĕн тăван пулса тăчĕ. Вăл çепĕç, илемлĕ, çăмăл. Чăваш сăввисене юратса вулатпăр, пăхмасăр вĕренетпĕр, хитре каласа пама тăрăшатпăр. Калавсене те кăмăллатпăр, класра сӳтсе яватпăр.

Чăваш чĕлхи – тăван анне чĕлхи. Ăна юратсан, хисеплесен, вĕренсен нихăçан та пĕтмĕ. Вăл пулсан – чăваш халăхĕ те ĕмĕр пурăнĕ.

*Кам пире ачашшăн лăпкать каçсерен,*
*Лайăх çын тăвасшăн çунать чĕререн?*

Ахальтен мар çак юрă сăмахĕсем аса килчĕç. 1998 çултанпа пирĕн çĕр-шывра чӳк уйăхĕн юлашки вырсарни кунĕнче Анне кунне уявлаççĕ.

Анне – кашни çыннăн пурнăçĕнчи чи ăшă сăмах. Кашниншĕнех çывăх, юратнă çын – анне. Пĕлсемччĕ мĕнлерех кирлĕ эсĕ мана. Тӳпери сарă хĕвелтен те ăшăрах санăн кăмăлу, çутă уйăх евĕр санăн сăну. Аннеçĕм, санăн ăшă аллусем ыратакан сурана сĕртĕнсенех – ыратни иртет. Çепĕç йăл куллу мана вăй-хăват парса тăрать. Эсĕ пулсассăн – сивĕ хĕл те ăшă, эсĕ пулас мар – хутса ăшăтнă пӳрт те сивĕ. Эсĕ пуррипех пурнăç тулăх. Аннеçĕм, эсĕ маншăн чи хакли, чун ăшши. Санăн ырă сăмаху мана тĕрек парать, тӳрĕ чунлă, çĕр-шыва тивĕçлĕ çын пулса ӳсме хистет.

Юратнă аннесене Çĕнĕ çулта çирĕп сывлăх, тулăх пурăнăç, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей сунатпăр. Сире ачăрсем, чун тĕпренчĕкĕрсем яланах савăнтарччăр.

***Юля АРБЕКОВА.***

Шупашкарти 10-мĕш шкулти 4 «и» класс ачисем тăван чĕлхене мĕнлерех юратса вĕреннине çирĕплетекен материалсем те пур пирĕн. Пултарулăх хĕлхемĕ Çĕнĕ çул вут вылявĕ пекех сирпĕнсе тăрать вĕренекенсенче. «Тантăш» тусĕсене хĕр ачасен хайлавĕсемпе паллаштарар. 10-мĕш шкулти «Виртуаллă класс» проектăн ертӳçипе Ю.Е.Анисимовăпа канашланă хыççăн тусăмăрсене çак шкултах 5 «п» класра вĕренекен Давид Васильев сăввине те вуласа пăхма сĕнер терĕмĕр (класс ертӳçи Е.Г.Лебедева).

## Мулкач



Лапка-лапка юр
çăвать,
Шап-шур чĕр чун
савăнать.
Пăт-пат сикет – йĕр
тăвать,
Унта-кунта пускалать.

Сике-сике улталать,
Калла-малла
пăтратать.
Виççĕ-тăваттă
хушкалать,
Пĕрре-иккĕ хутлатать.

Тилĕ пуçне çавăрать,
Кашкăр тăнне
кăларать.
Тăманаран пытанать,
Сунарçăран вăл тарать.

***Натали СИДОРОВА.***

**Сăн ӳкерчĕкре**: виртуаллă класс старости – Натали

## Тăван хулам, Шупашкар



Савнă шурă Шупашкар,
Эсĕ манăн чун ăшши,
Ир те каç та куç тулли,
Шурă-шурă Шупашкар.

Савнă шурă Шупашкар –
Эс пĕлместĕн иксĕлме.
Музейсем, театрсем
Илĕртеççĕ этеме.

Анлă Атăл хĕррипе
Ларса тухнă керменсем,
Ăшă Атăл шывĕпе
Савăнаççĕ çамрăксем!

Шывĕ тăрă пулнипе
Вăй выляççĕ пулăсем,
Çакна курсан ачасем
Хĕпĕртеççĕ чĕререн.

Юнашар – аэропорт,
Вĕçевре самолетсем,
Вĕçме пĕлмеç шăп-шăпăрт,
Тăр чĕтреççĕ пĕлĕтсем.

Савнă шурă Шупашкар,
Эс ялан ман асăмра,
Мухтанатăп эп санпа –
Тăван хулам, Шупашкар!

***Юля АРБЕКОВА.***

## Пурăнасчĕ çĕр çулччен!

Сывлăха упрас тесе
Пахчара кăлартăм кишĕр,
Хутăм витрене татса
Баклажан, кăшман, хăяр.
Турăм вĕсенчен салат.
Кирлĕ витамин пухса
Çирĕплетрĕм сывлăха.
Ирсерен тăвап зарядка,
Сĕт ĕçетĕп кашни кун,
Пылпа тăпăрчă çиетĕп –
Вăй пухатăп каннă кун.
Халĕ сывлăх манăн лайăх –
Пурăнатăп 100 çулччен!

***Давид ВАСИЛЬЕВ,***
***5 «п» класс.***

# Тĕл пулу



# «Тантăш» – Муркаш тăрăхĕнче

**Юнкă шкулĕ пĕлтĕр 135 çул тултарчĕ. 1966 çулта ăна Спиридон Михайлович Михайлов-Янтуш ятне панă. Вăл камне пĕлмен çын çук та пулĕ. Спиридон Михайлов – пĕрремĕш чăваш историкĕ, этнографĕ, халăх сăмахлăхне пуçтараканĕ. Ун ячĕпе шкулта тăтăшах чăваш чĕлхи эрни е вунă кунлăх иртет.**

**Класс тулашĕнчи ĕçсене йĕркелекен Ирина Григорьевна Илларионова шкул пурнăçĕпе хаваспах паллаштарма килĕшрĕ. Паянхи куна та 158 ача вĕренет. Шкул автобусĕ тăвата яла ĕлкĕрсе пурне те урока вăхăтра çитерет.**

**«Иртнĕ çул вĕренсе тухнă вунă ачаран тăххăрăшĕ халĕ аслă шкулта ăс пухать, пĕри салтакра. Яшсемпе хĕрсем пире манманни савăнтарать», – тет Ирина Григорьевна. Вĕренекенсем хăйсен пурнăçне йĕркелеме пултарсан, чуна килĕшекен ĕçе пурнăçлама тытăнсан шкул ĕçченĕсем, паллах, питĕ савăнаççĕ. Эппин, вĕсем тăрăшни сая кайман. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Юрьевна Тарасова та çак шкултанах вĕренсе тухнă. Анатолий Порфирьевич Данилов И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче пулас журналистсене вĕрентет.**

## Хăрăк йывăç вырăнне – çамрăк хунав

Шкулта çут çанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен «Лесовички» ушкăн пур. Ăна Татьяна Владимировна Ермакова ертсе пырать. Пултаруллă йыш çамрăк экологсен слетĕнче виçĕ, вăрманçăсен слетĕнче пилĕк çул хушши çĕнтерсе пынă.

Çут çанталăк тусĕсем çуллен вăрмана хăрăк йывăçсенчен тасатаççĕ те шкул питомникĕнче вăрăран ўстернĕ хыр, лиственница тата чăрăш йывăçĕсене лартса хăвараççĕ. Çăва çине каймалли çул хĕррипе те ешереççĕ халь вĕсем. Яла çитсе пынă чухнех асăрхатăн, çул хĕррипе лартса тухнă чĕрĕ «хўмене».

«Лесовички» ушкăн «Чи лайăх шкул лесничестви» республика конкурсĕнче 1-мĕш вырăн йышăннă. Кĕркунне Красноярск хулинче иртнĕ Раççей конкурсне вун пĕрмĕшĕнчи Марина Хошкина тата тăххăрмĕшĕнчи Лейла Игнатьева хутшăннă, 3-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Кружока çўрени ачасене малашлăх çул-йĕрне суйлама та пулăшать. Акă пĕлтĕр ылтăн медальпе вĕренсе тухнă Мария Сытина халĕ Мари патшалăх техника университечĕн экологи факультетĕнче вĕренет. Маттур пике шкулта чухнех Мускаври «Тăван çĕр-шыв» конкурсра çĕнтернĕ, «Орленок» лагерьте канма путевка тивĕçнĕ. «Машăна малашне те ăнăçу сунатăп», – тет Ирина Григорьевна.

## Çамрăк космонавтсен «Юнга» отрячĕ – республикăра чи лайăххи

Космоспа кăсăкланакан ача сахал мар пуль тетĕп. Çак шкулта та вĕсем чылаях. Çамрăк космонавтсен «Юнга» отрячĕ пĕр шухăшлă ачасене пĕрле пуçтарнă. Акă пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ вăл республикăри космонавтсен чи лайăх отрячĕ шутланать. Ертсе пыраканĕсем – класс тулашĕнчи ĕçсене йĕркелекен Ирина Григорьевна Илларионова тата Ирина Валерьяновна Киршева аслă вожатăй. Ачасем республика шайĕнчи тĕрлĕ конкурса, ăмăртăва хутшăнаççĕ. Авиамоделистсен ăмăртăвĕнче, сывлăш çĕленĕсен фестивалĕнче ачасем пĕрремĕш вырăн та йышăннă. Çавăнпа иккĕмĕш çул ĕнтĕ çак республика ăмăртăвĕсем те Юнкă шкулĕнчех иртнĕ. Сывлăш çĕленĕсене хăйсемех ăсталаççĕ, хăш чухне схемăсене Интернетран илеççĕ. Самолет тăвас вăрттăнлăха вара географи вĕрентекен Юрий Николаевич Самушков уçса парать. Хăй вăхăтĕнче вăл çак техникăпа аппаланма юратнă, кунта килсен пĕр шухăшлă ачасен пĕрлешĕвне йĕркелесе янă. Пионер юхăмĕ пĕтсен ачасене самолет тăвакансен отрядне пуçтарнă. Шкулта вĕреннĕ чухне çав отрядăн командирĕ пулнă Сергей Толстов халĕ – Мускаври авиаци институчĕн 4-мĕш курс студенчĕ. Шкулти ĕмĕчĕ майĕпен пурнăçланса пырать.

Шкул ачисем наукăпа практика конференцийĕсене те тăтăшах хутшăнаççĕ. Улттăмĕш класри Анастасия Киршева «Сывлăш шарне мĕншĕн çапла калаççĕ?» тата саккăрмĕшĕнчи Алексей Кудряшов «Партизан çуначĕсем» тĕпчев ĕçĕсемпе Королев хулинче иртнĕ «Королев вулавĕсене» хутшăнса виççĕмĕш вырăн йышăннă.

«Пирĕн боксерсем те пур», – терĕ Ирина Григорьевна. Нумаях пулмасть Çĕнĕ Шупашкарти ăмăртура тăххăрмĕш класри Виталий Алексеев малти вырăн çĕнсе илнĕ. Алексейпа Сергей Кудряшовсем те кашни ăмăртуранах çĕнтерўпе таврăнаççĕ. «Муркаш» строительство организацийĕ» тулли мар яваплăхлă пĕрлешĕвĕн ертўçи Владислав Николаевич Семенов Юнкăсене укçа-тенкĕ енчен яланах пулăшать. Уявсенче те манмасть. Хавхалантарать, çынсен кăмăлне хăпартма тăрăшать. Вĕрентекенсен кунĕ ячĕпе саламласа каллех парнепе савăнтарнă.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Ирина Геннадьевна Михалкинăпа Надежда Вячеславовна Шандимирова ачасене тăтăшах тĕрлĕ конкурса явăçтараççĕ. Акă «Çухалнине чĕртĕпĕр» («Возродим утраченное») конкурсра саккăрмĕшĕнчи Андрей Краснов тата Инна Ягунова «Çамрăк тĕпчевçĕсем» номинацире 3-мĕш вырăна тухнă.

Çак шкул пултаруллă та хастар вĕренекенĕсемпе, чăнах та, мăнаçланма пултарать. Иртнĕ вĕренў çулĕнче Елизавета Шишкина, Екатерина Федорова тата Димитрий Ильин республика Пуçлăхĕн стипендиачĕсем пулса тăнă. Катя Федорова 2014 çулта Раççей Президенчĕн стипендине илме тивĕçнине те пĕлтерчĕç.



## «Вĕрентекен пулас килет...»

Иккĕмĕшĕнче вĕренекен Софья Димитриева илемлĕхе курма пĕлет. Тавралăха сăнанă май ешĕл çут çанталăк сăнĕсене хут çине йĕрлесе чĕрĕлĕх кĕртесси – унăн киленĕçĕ. Хăйĕн ĕçĕсемпе хĕр ача йывăç-курăка, чĕр чунсене, шывшура хўтĕлеме вĕрентесшĕн. Амăшĕн сăнне ўкерме те питĕ юратать вăл. Ўкерчĕксен конкурсне хутшăнса тăтăшах Хисеп хутне тивĕçет. «Манăн анне – чи лайăххи» конкурсра та палăрчĕ.

Софья çутă ĕмĕтпе çунатланать: вĕрентекен пуласшăн вăл. Шкултан киле таврăнсанах йăмăкĕсене сĕтел хушшине лартать те «урок» ирттерме тытăнать. Маринăпа Надя сас паллисене паллама та вĕренсе çитрĕç ĕнтĕ. Эппин, хĕр ачан ĕмĕчĕ те пурнăçланĕ-ха. Тăрăшни, тĕллев тытни çеç кирлĕ.

## Тăрăшулăхпа ўсĕм юнашар



Пĕрремĕшсен вĕрентекенĕ Елена Григорьевна Яндушкина – Спиридон Михайлов-Янтуш йăхĕнчен. Мăн аслашшĕн ĕçне малалла тăсма тăрăшаканскер ачасенче пĕчĕклех чăвашлăх туйăмне çирĕплетет. «Кашни çулах Янтуш ĕçĕсене тĕпчесе проект ĕçĕсемпе тухса калаçатпăр», – тет Елена Григорьевна. Вĕрентекенпе пĕрле ачасем паллă çыннăн палăкне тасатса тирпейлесех тăраççĕ.

«Эпир ачасене чăвашлăха манма памастпăр», – тет çирĕм саккăрмĕш çул шăпăрлансене пĕлў тĕнчинче çавăтакан пултаруллă вĕрентекен. Кашни вĕренекенĕн хăй евĕрлĕхне асăрхать вăл. Тăрăшсан пурте ўсĕм кăтартма пултараççĕ, ĕçе явăçтарма кăна пĕлмелле. Вĕренекенсем час-часах тĕрлĕ конкурса хутшăнаççĕ, Хисеп хутне тивĕçсен çав тери савăнаççĕ. Çак класс «Эткер» центрпа тачă çыхăну тытать. Пĕчĕк ўкерчĕкрен пуçласа пысăк та сюжетлисем таран тума вĕренеççĕ ачасем. Çапла ĕçлени çут çанталăка, чĕр чунсене юратма, ырăрах пулма вĕрентет. Учителĕн çак шухăшĕпе килĕшмесĕр май çук. Уроксем хыççăн та шăпăрлансем киле васкамаççĕ, кружока юлаççĕ. Математикăна, ал ĕçне юратакансем хаваспах тăрăшаççĕ вара.

– Ачасене пĕрремĕш класа килсенех шкула мĕншĕн Спиридон Михайлов-Янтуш ятне панине ăнлантаратпăр, – тет Елена Григорьевна. – Хайлавĕсене тарăнрах вĕрентетпĕр. Ан тив, вĕсем те тăван халăх умĕнчи яваплăхне туйса çитĕнччĕр.

## Ырă чунлăха мĕнле ўстермелле?

Час-часах вулавăша çул такăрлатакан Настя Шурнеева вырăс классикĕн Александр Сергеевич Пушкинăн сăввисене кăмăллать. Хайлавĕсене илемлĕ чĕлхепе çырни, вĕсем пурнăçа юратма вĕрентни килĕшет хĕр ачана. Хăй те йăмăкне халалласа икĕ сăвă шăрçаласа курнă. Юратнă поэтран тĕслĕх илсе татах та çырасшăн-ха.



Настя чĕр чунсене, уйрăмах кушаксене, питĕ юратать. «Хитрескерсене тата мăрлатаканскерсене ачашламасăр епле чăтăн-ха? Кăмăла та тўрех çĕклеççĕ», – тет вăл.

Пĕрре çапла Настя урокра «3» паллă илнĕ. Çак ăнăçсăр пулăм чунне питĕ хурлантарнăран кăмăлĕ хуçăлнă унăн. Киле таврăнсан хĕр ача юратнă кушакне ачашланă та тинех лăпланнă. Халĕ лайăх паллăсемпе кăна вĕренет вăл.

Настьăн пиччĕшĕ Даниил – пиллĕкмĕш класс ачи. Арçын ача калание ялан итлет, килти ĕçсене тĕплĕ пурнăçлать. Паллах, вăл ырă тĕслĕх вырăнĕнче. Настя та ун пек пуласшăн. Тăрăшса вĕренекенскер ача садне çўрекен йăмăкне Ульянăна та ырă тĕслĕх кăтартать. Хăй вăхăтĕнче Настьăна пиччĕшĕ сас паллисемпе паллаштарнă. Халĕ Настя йăмăкне вĕрентет.

Пĕррехинче çут çанталăка хўтĕлекен хĕр ача урамра хуçасăр кушака асăрханă, ăна шелленĕ те киле илсе кĕнĕ. Амăшĕ хĕрне çак пархатарлă утăмшăн ырланă. Ырă чунлăх çакăн пек пулăмсенчен ўссе пырать-çке.

Малашнехи тĕллевсем çинчен ыйтсан: «Ытларах вĕренесчĕ», – терĕ хăй шухăшне ялан çирĕп палăртакан маттур хĕр ача.

***Лариса ПЕТРОВА.***

# «Тантăш» – Канаш енре

**Канаш районĕнчи Шелттем шкулне пырса кĕрсенех кунта алă усса ларма юратман ачасем вĕреннине туйрăм. Вĕсен пĕр пушă вăхăт та çук тейĕн. Тăхтава та усăллă ирттерме тăрăшаççĕ арçын ачасемпе хĕр ачасем. Хăшĕ-пĕри тепĕр урока хатĕрленет: киле ĕçне аса илет. Теприсен – тĕрĕслев ĕçĕ... Ăна валли те правилăсемпе теоремăсене пăхса тухмалла. Библиотекăна çул тытакан та сахал мар. Акă теннис сĕтелĕ патĕнче пĕр ушкăн пухăннă, пурте тусĕсем еплерех вылянине сăнаса тăраççĕ, хавхаланаççĕ...**

**Кĕçĕн классен вĕренў кунĕ те вĕçленнĕ ĕнтĕ, анчах вĕсем те киле кайма васкамаççĕ. Пĕчĕкскерсем теннис сĕтелне хупăрласа илнĕ, аслă тусĕсен çак выляв техникипе кăсăкланаççĕ пулас...**

**Шелттем шкулĕн хастар, маттур ачисем пĕрре те пушă ларманнине директор çумĕ Светлана Алексеевна Ендерова калани тепĕр хутчен ĕнентерчĕ. Вĕренўре те, спортра та çитĕнўсем тума ăнтăлаççĕ, тĕрлĕ кружок-секцие çул такăрлатаççĕ иккен кунта пĕлў илекенсем.**

## Арçын ачасем те хаваспах çўреççĕ...



Светлана Алексеевна директор çумĕн ĕçĕсене пурнăçлать çеç мар, "Асамлă çекĕл" кружок та ертсе пырать. Улттăмĕш класс ертўçи пулнă май, вăл вĕсене çыхас ĕçе явăçтарать. Çав хушăрах Светлана Алексеевна "Ăста алăсем" кружок ертўçи те. Çĕнĕ çул умĕн шкул ачисем тĕрлĕ тĕслĕ хутран теттесем ăсталанă. Вĕсемпе илемлетнĕ чăрăш тавра вĕренекенсем юрласа, ташласа савăнчĕç.

– Ачасем пултаруллă, савăнсах кружока çўреççĕ, – сăмах хушрĕ Светлана Алексеевна. – Мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарни темрен паха та. Анчах та кун валли эрнере пĕр сехет çеç уйăрнă.

"Асамлă çекĕл" кружока хĕр ачасем çеç мар, арçын ачасем те хаваспах çўреççĕ. Кирилл Федотов, Николай Филиппов тата Валера Табаков ыттисемпе пĕр танах ĕçлеме тăрăшаççĕ, вĕсем çекĕлпе çаврашкасем çыхса хатĕрленĕ ĕнтĕ. Хĕр ачасем вара амăшĕ, асламăшĕ-кукамăшĕ валли – тутăрсем. Кружока пур класс вĕренекенĕсем те çул такăрлатниех кĕçĕннисем ĕçе хăнăхса ўсессе пĕлтерет.

– Çыхма пĕлменнисем те кĕске хушăра унăн вăрттăнлăхне парăнтарчĕç, – пĕлтерет "Асамлă çекĕл" кружок ертўçи. – Ашшĕ-амăшĕ те ачисене вĕрентесшĕн. Хăшĕ-пĕри пăрахас шухăшлă та пулчĕ, анчах та аслисем кружока çўрени усăсăр пулмасса ăнлантарни вĕсен шухăшне улăштарчĕ. Халĕ вара пĕр урок та сиктермеççĕ, юратаççĕ. Эпир эрнере пĕр хут пухăнатпăр, ачасем куншăн кăшт пăшăрханаççĕ – ытларах тĕл пулас кăмăллă. Кĕркуннехи каникулта та, хĕллехинче те пуçтарăнса ăсталăха ўстертĕмĕр. Çуркунне вара шкулта курав ирттерес шухăшлă. Тантăшĕсен пултарулăхĕпе пурте паллашччăр.



## Пур енлĕ аталанма тăрăшаççĕ

Шкул ачисем кашни çулах район шайĕнче иртекен тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнса шкул чысне çўллĕ шая çĕклеççĕ. Спортра вара яланах çитĕнўпе савăнаймастăн, хăш-чухне парăнма та тивет.



Раштав уйăхĕнче Шăхасанта тăван районĕнчи шкулĕсем хушшинче баскетболла выляс тупăшу иртнĕ. Ăмăртура Шелттĕм шкулĕн чысне 8-мĕш класс хĕр ачисем хўтĕленĕ. Финала тухма вĕсене 1 очко çеç çитеймен, çавăнпа 4-мĕш вырăнпа çырлахма тивнĕ. Хĕр ачасем волейбол турнирне хутшăнма палăртнă, хальхинче вĕсем мала тухасса шанса тăраççĕ.

Çак уйăхрах предмет олимпиадисем иртсе кайнă. Çитĕнўсемпе мухтанмалăх пур. Учительсем, ачасем тăрăшни харама кайман. Акă 8-мĕш класри Артем Зайцевпа Володя Семенов район шайĕнче палăрнă, иккĕшĕ те 1-мĕш вырăна тухнă. Артем чăваш чĕлхи тата обществознани предмечĕсемпе, Володя технологипе иртнĕ олимпиадăра шкул чысне хўтеленĕ. Артем – вĕренў отличникĕ, тĕрлĕ мероприятие активлă хутшăнать, пушă вăхăтра сăвă шăрçалать.



Унсăр пуçне саккăрмĕшсем Юрий Васильевич Осанов ертсе пыракан "Çамрăк патриот" кружока çўреççĕ, тĕл пересसинче, чупассинче вăй виçеççĕ.

– Кружок пурри Тăван çĕр-шыва юратас туйăма аталантарать, – теççĕ ачасем.

## Шелттем шкулĕн "çăлтăрĕ"



Улттăмĕш класра вĕренекен Данил Сергеев юрă шăрантарма кăмăллать. Çавна пула шкулти музыка кружокне çўрет, кунта Сергей Витальевич Сергеев патĕнче ăсталăха туптать.

– Данилăн сасси уçă. Вăл юрлама юратать. Тин çеç "Канаш ентешлĕхĕ" ирттернĕ фестивале хутшăнчĕ, Тав хутне тивĕç пулчĕ. Данил ытларах чăваш халăх тата эстрада çăлтăрĕсен юррисене шăрантарать. Музыка класне пурĕ 8 ача çўрет. Кашнийĕн тĕрлĕ музыка инструменчĕ. Данил Сергеев та баян калать, параппан çапать. Тĕрлĕ концерта, конкурса хутшăнмашкăн Данил валли ятарлă тумтир çĕленĕ. Халĕ нарăс уйăхĕнче иртекен "Мехел" конкурса хатĕрленетпĕр, – пĕлтерчĕ Сергей Витальевич.

Çак пултарулăх камран куçни те паллă. Данилăн ашшĕ те купăс калать, аслă пиччĕшĕ вара Шупашкарти музыка училищинче вĕренет. Савăк кăмăллă Данилăна конкурсра çĕнтермешкĕн ăнăçу сунатпăр! Пурăна киле чăваш эстрадинче çĕнĕ "çăлтăр" çураласса шанас килет.

***Ирина КОШКИНА.***

**АВТОР сăн ўкерчĕкĕсем.**

# Темле ĕç те тума пултаракан хресчен хĕрĕ



**«Эпĕ хресчен хĕрĕ», – тет Ева Лисина çыравçă. Капла калама сăлтавĕ пурах. Вăл ўсне Патăрьел районĕнчи Çĕньялти урама та Хиртикас теççĕ. Хушамачĕ те унăн таврари чаплă пахчаçăн, аслашшĕн, хушамачĕ пулнă. Виççĕшне те, виçĕ пĕр тăвана, Айхи Геннадийĕ, Айхи Луизи, Айхи Еви тесе чĕннĕ.**

Ăçтан тухнă-ха ку хушамат? Аслашшĕ пĕррехинче «хайхи» теес чухне «айхи» тенĕ иккен. Çавăнтан вара ăна Айхи Энтри тесе калама пуçланă. Ку ялти хушамат пулнă-ха. Ĕçлĕ хутсенчи вара – Лисин.

Ашшĕ, Николай Андреевич, вырăс чĕлхипе литератури вĕрентнĕ. Тĕрлĕ çĕрте ĕçлеме тивнĕрен, хăй ятран çурт лартман. Шкул хваттерĕнче пурăннă. Ачисем тĕрлĕ ялта çуралнă: Геннадий – Çĕньялта, Луиза – Нăрваш Шăхальте, Ева – Именкассинче.

Ашшĕ вăрçăра вилсен, амăшĕ хăраххăн çурт лартнă. Улăм витнĕ çурт.

## Шăнкăртам урамĕ тем тăршшĕ...

Колхоза кĕнĕ. Амăшĕ колхозра ĕçленĕ. Ачисем пĕрлех тăрмашнă.

Колхоза кĕменнисене йывăра килнĕ. Çав йышри тăвата ачаллă пĕр хĕрарăм уйрăмах нуша курнă. Упăшки ир вилнĕ, хутлĕх çук. Евăсен амăшĕ ăна шелленĕ, пулăшнă.

Кĕçĕнни ачаш ўсекен. Кунта апла мар.

Геннадий Патăрьелти педагогика училищинче вĕренет. Шăмат кун. Ева ун валли апат-çимĕç леçме каять. Çуран. Çулĕ вăрăм. Шăнкăртам урамĕ тем тăршшĕ. Чăвашла тăхăннăскере тутар ачисем тĕлĕнсе сăнаççĕ. Пăхчăрин! Пуçра пĕр шухăш кăна – хăвăртрах çитесчĕ.

Чирлĕ аппăшне больницăра инвалид шутне кĕртекен хут паччăр тесе унăнах тăрăшма тивнĕ. Çакна «Çăкăр чĕлли» калавра аван çырса кăтартнă.

Луизăсăр пуçне тата тепĕр аппăшĕ те пулнă. Клара ятлăскер. Пĕр аçаран вĕсем, ама расна. Кларăн амăшĕ – Мария Харитоновна. Евăна амăшĕ: «Клара аппу кĕпе лайăх çĕлет, кайса çĕлеттер», – тенĕ. Çĕлесе панă. Кăмăлтан. Аппăшĕ хăй те вĕсем патне пырса çўренĕ. Клара учительте ĕçленĕ. Качча кайсан çемйипех Çĕпĕре куçса кайнă. Мария Харитоновна ялтах юлнă.

## Кĕр! кĕрлерĕ трактор

Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академийĕн пĕрремĕш курсĕнче сивĕ пуçлансан та вĕренме пиншакпах çўренĕ. «Сивĕ вĕт, хĕрĕм», – пăшăрханнă Ленин ячĕллĕ библиотекăн вахтерĕ. «Эпĕ Çĕпĕр çынни, сивве хăнăхнă», – таварнă чăваш хĕрĕ.

Геннадий хăй те пиншакпа çеç çўрет те-ха. Пырĕçке, аптрамĕ. Йăмăкĕ кăна ан шăнтăрччĕ. Гонорар илсенех ăна пальто туянса пачĕ.

Биолога вĕренсе тухасси те тетĕшĕнченех килнĕ. Вăл çапла хушнă.

Тетĕшĕ пĕррехинче Борис Пастернакăн вулама чарнă «Доктор Живаго» кĕнекине икĕ кунлăха пачĕ. Хĕрсе кайсах вуларĕ. Ыран «Сысна ĕрчетесси» йывăр предметпа экзамен памалли те хăратмарĕ. Вуласа тухрĕ-тухрех. Экзамен та чиперех тытрĕ.

Саратов облаçне практикăна янă. Акма тухса кайнă та тыр-пул пуçтарса кĕртмесĕр те таврăнман.

Ева, пĕрремĕш категориллĕ тракторист-дизелист, ДТ-54 гусеницăллă тракторпа сухаланă, культиваци тунă. Вырмара комбайнпа ĕçленĕ, тусанпа хылчăк вĕçнине пăхмасăр тырра улăмран уйăрнă.

Ай, турах, хăш чухне тата шофер çуккипе практикант студентсене кўршĕ ялтан грузовикпе вăлах кўретчĕ. Академирен уй-хир ученăй агрономне вĕренсе тухнă. Хĕвел çаврăнăш пирки диплом ĕçĕ хўтĕленĕ.

## Рудоминопа та, Косыгинăпа та ĕçлесе курчĕ

Унтан хăй тĕллĕн туркă чĕлхине вĕреннĕ. Туркă чĕлхипе экзамен тытса Ют чĕлхе литературин Пĕтĕм Союзри патшалăх библиотекинче биолог-куçаруçăра ĕçлеме пуçланă.

Тĕрлĕ чĕлхепе çырнă биологи журналĕсенчи статьясене вырăсла куçарса аннотацисем тунă. Çакна вара вулакансем валли библиотека картотекине вырнаçтарса тăнă.

Библиотекăна тĕнчипе паллă Маргарита Рудомино йĕркелесе уçнă, нумай-нумай çул хушши директорта ĕçленĕ. Халь çав библиотека Маргарита Рудомино ячĕпе хисепленет.

Маргарита Ивановна хыççăн директорта çĕр-шыв ертўçин Алексей Косыгинăн хĕрĕ Людмила Гвишиани (Косыгина) ĕçленĕ.

Çĕнĕ шăпăр çĕнĕлле шăлать. Улшăнусем пуçланнă. Естественнăй наукăсен пайне (Ева Николаевна унта ĕçленĕ) пĕтернĕ. Биологсене ĕçрен кăларнă. Ку йыша Ева Лисина та лекме пултарнă. Хăюллă чăваш хĕрĕ директор патне каять. Мĕн каламаллине тўрех калать:

– Людмила Алексеевна, эпĕ ку библиотекăна питĕ юрататăп. Мана кунтан тухса кайма питĕ йывăр. Эпĕ сиртен хама çакăнтах хăварма ыйтатăп.

– Хăвăр шутăрпа эсир кунта мĕн тума пултарăр?

– Эпĕ литературăна юратакан çын. Библиотекăра курав уйрăмĕ пур. Эпĕ унта кĕнеке куравĕсем йĕркелеме пултарнă пулăттăм.

– Апла çапла пултăр, – тенĕ директор.

Хастарлăхне, пултарулăхне кура кĕçех ăна ют çĕр-шывсене илсе каймалли кĕнеке куравĕсем йĕркелеме хушаççĕ. Çав куравсене вăл Польшăра, Чехословакире кăтартнă. Германие икĕ хутчен те кайса килнĕ.

Курав кĕнекесенчен кăна мар, сăн ўкерчĕксенчен те тăнă. Этикеткăсем, халăхпа ĕçлекен ушкăн валли экскурси текстне çырса хатĕрленĕ. Ют çĕр-шыва çитсен тухса калаçнă, экскурси ирттернĕ. Пĕр сăмахпа каласан, Ева Лисина – çул усаканĕ. Ун хыççăн ытти сотрудниксем çав куравпах ют çĕрсене хутланă.

«Михаил Шолохов хайлавĕсем тĕнчери пур чĕлхепе те янăраççĕ» курав уйрăмах асра юлнă. Людмила Гвишиани (Косыгина) директор Михаил Шолохова аван пĕлнĕ. Дон-çи-Ростоври музейре пĕр эрне тĕпченĕ. Сăн ўкерчĕксем ўкерсе илнĕ.

Ун чухне Шолохов çинчен кăна калаçнă. «Евăн пĕр тема кăна – Шолохов», – шўтленĕ тетĕшĕ.

Библиотекăра шăп та лăп 20 çул ĕçленĕ: 5 çул – биолог-куçаруçăра, 15 çул – курав ушкăнĕнче. Тавра курăм самаях ўснĕ. Малтанхи ĕçре кашни çул е икĕ çултан ют чĕлхесемпе экзамен панă. Комиссире виçĕ çын, унсăр пуçне Маргарита Рудомино директор та кунтах ларнă. Иккĕмĕш ĕçре уйрăмах нумай тĕпчесе пĕлнĕ.

## Йыхăрать çĕнĕ ĕç

Библиотекăра ĕçлеме пуçлани çирĕм çул çитсен тепĕр кунних, малашне литературăпа çеç ĕçлес тесе, унтан кайнă.

1991 çулта «Нимĕç хумĕ» радиостанци (ФРГ) Совет Союзĕнче пурăнакан авторсен калавĕсен конкурсне ирттернĕ. Çав конкурса пурĕ 1683 калав хутшăннă. Конкурсра Ева Лисинăн «Çăкăр чĕлли» калавĕ çĕнтернĕ.

Калавпа радиоспектакль те лартнă нимĕçсем. Ăна «Нимĕç хумĕ» радиостанципе панă. Вăл вăтăр минут пырать. Хушăран-хушăран вăл халĕ те эфирта янăрать.

Пултарулăхне пирĕн çĕр-шывра та асăрханă. Ачасем валли çырнă чи лайăх кĕнекесен Пĕтĕм Союзри конкурсĕнче (1987 çул) унăн «Хупах хăлха Илюк» повеçĕ çĕнтернĕ. Шупашкарта Пукане театрĕнче çав хайлавпа спектакль те лартнă. Ăна тĕрлĕ-тĕрлĕ çĕр-шывра кăтартнă. Вăл çырнисене ача-пăча питĕ кăмăллать. Ахальтен мар ĕнтĕ конкурсра «Улăхпи», «Вĕçекен кўлĕ» ачасен чи юратнă кĕнекисем пулнине палăртнă.

Библие чăвашла куçарса кăларас ĕçре 20 çул тăрăшрĕ. Мĕн тери пысăк чăтăмлăх!

## Таçта та тўсĕмлĕх çитерет

Вăл Синай тăвĕ (е урăхла Хорив тăвĕ) çине хăпарнă. Синай тăвĕ Египетра, пуш хирте вырнаçнă. Икĕ пин метра яхăн çўле хăпармалла. Мĕнрен паллă-ха ку ту? Моисее Турă Синай тăвĕ çине чĕнсе илет. 40 кун та 40 каç пулать унта Моисей. Турă ăна 10 заповедь (ўкĕт) парать. Синай тăвĕ çине хăпарма питĕ йывăр. Аялта утмăл градус шăрăх. Çавăнпа çĕрле çеç хăпарма тивет. Пуçтарăнасса Çветтуй Екатерина мăнастирĕнче пуçтарăнаççĕ.

Хăпарнăçем сивĕтсе те сивĕтсе пырать. Кофта, куртка тăхăнса яратăн. Аннăçемĕн вара майĕпен салтăнма пикенетĕн, мăнастире çитиччен ăшă япаласене хывса пăрахатăн.

Çўлте – чиркў. Унта çылăх каçарттарса сыпатăн. Ирхине Синай тăвĕ çинчен хĕвел тухнине куратăн. Хĕвел тухать вут пек, тўпе хĕп-хĕрлĕ, вут хĕвел хăвăн çине килнĕнех туйăнать.

Çўле хăпарнă, аяла аннă чухне Ева Николаевна тĕве çине ларман. Укçа тăвас текенсем ун хыççăн тĕвепе пынă, ывăнсан ку хĕрарăм тĕве çине ларатех тесе ĕмĕтленнĕ пулĕ. Çук, вĕсем шухăшланă пек пулман. Уншăн çак ту çине хăпарни питĕ кирлĕ те пĕлтерĕшлĕ пулнă, çавăнпа вăл темле йывăр пулсан та хăйĕн вăйĕпех хăпарма тăрăшнă.

## «Тăванăм, ах, анне пекех вĕт-ха эс»

Йăмăкĕн ăшă кăмăлне ытараймасăр çапла каланă тетĕшĕ, тĕнчипе паллă Геннадий Айхи сăвăç.

Шупашкара пурăнма куçнă йăмăкне питĕ тунсăхланă вăл, Мускаврах юлнăскер. Ăмсаннă та – Шупашкарта тăван чĕлхе куллен янăрать. Илтме те, калаçма та пулать.

Ева Николаевна та тетĕшĕ Шупашкара килессе тек-текех кĕтнĕ. Пĕр тăванпа шăкăл-шăкăл калаçса ларнине мĕн çитейĕ? Пиччĕшĕн чи юратнă апачĕ мĕн иккенне аван чухланă. Салма яшки – акă мĕн. Килмессерен салма яшкипе сăйланă. Геннадий Айхишĕн пулсан, ытти апат айккинче тăтăр!

Тетĕшĕ вилнĕренпе Ева Николаевна унăн еткерлĕхне типтерлĕн упрать. Пĕлтĕр çăвĕпех Тверь облаçĕнчи Тинĕс Тăвайкки (Денисова Горка) ялĕнче ирттерчĕ. Иккĕшĕн те дачисем унта. Пахча çимĕç туса илнипе пĕрлех тетĕшĕн чăвашла сăввисене вырăсла куçарчĕ. Швецири Микаэль Нюдаль издатель вĕсене шведла куçарса кăларасшăн.

Пуçне килнĕ хăйĕн хайлавĕсем те канăç памаççĕ. Епле те пулин çавсене çырма хал çитересшĕн вăл.

*Галина ЕЛИВАНОВА,*
***К.В. Иванов ячĕллĕ Литература музейĕн наука аслă сотрудникĕ.***

**Сăн ўкерчĕкре:** Ева Лисина.

Тантăш 9
1 №, 2014, кăрлач 10

Левтина Марье

# Тăлăх Марук

(Вун икĕ курăнуллă инсценировка)

**5-мĕш курăну**
**Хутшăнаççĕ: Анюк – пилĕк çулта,**
**Ваçук – вунă çулта.**

***Кăрлач уйăхĕ. Кăпăшка юр кунĕн-çĕрĕн çунăран урамра йĕри-тавра шап-шурă. Марукăн аслашшĕпе асламăшĕн килĕ çумĕнчи тăвайккинчен хĕллехи каникул вăхăтĕнче ачасем кунĕпе тенĕ пекех аслăраххисем йĕлтĕрпе, пĕчĕкреххисем çунашкапа ярăнса савăнаççĕ. Марук та вĕсенчен юлмасть. Аслашшĕ илсе панă илемлĕ çунашка çине ларать те пăрланнă юхан шыв хĕрне çитиччченех çил пек вĕçтерет. Çавăнтах шкул çулне çитеймен кÿршĕ хĕр ачи Анюк та ыттисем пекех çÿллĕ тăвайккинчен пĕр хăрамасăрах ярăнать. Шарик те вĕсем хыççăн сиккелет кăна, хамлатать, савăннипе хÿрине вылятать, юр ăшне кĕрсе кайса йăваланать.***

**Шарик.** Р-р-р! Гав-гав-гав! Р-р, гав!..

**Марук.** Ой, Шарик! Эсĕ халь шап-шурă пултăн! ***(Кулать)***.

**Шарик**. Гав! Гав-гав! Гав!

**Марук.** Эсĕ мĕн, Шарик, манăн çунашкана каллех илсе хăпартасшăн мар пулĕ те?

**Шарик.** Гав!

**Марук.** Ме апла. Кантринчен çырт та илсе хăпарт эппин.

**Шарик.** Ам! Р-р-р!

**Анюк**. Ой, Марук, санăн Шарик мĕн тери маттур та вара! Кашнинчех çунашкуна тытать те çÿле çитиччченех илсе хăпартать. Эпĕ кун пек йытă ниçта та курман.

**Марук** (***кулать***). Çапла. Вăл тĕлĕнмелле ăслă. Мĕн ыйтнине йăлт ăнланать. Пар-ха, Анюк, сан çунашкуна хам туртса хăпартăп. Атту часах ывăнса çитĕн тата...

**Анюк.** Тавах, Марук.

**Марук.** Эсĕ шкула хăçан каятăн-ха?

**Анюк.** Тепĕр çул авăн уйăхĕнче эпĕ те шкула кайма тытăнăп. Эх, ун чухне вара сан пекех «пиллĕк» паллăсем кăна илме тăрăшăп. Ой!.. Ку пуçтах Ваçук каллех юр чăмăрккипе персе питрен лектерчĕ... Халь куç та уçăлмасть ĕнтĕ, мĕн тери ыраттарчĕ. (***Макăрать***).

**Ваçук**. Ха-ха-ха! Лектертĕм пулас!

**Марук.** Эсĕ, Ваçук, виççĕмĕш класра вĕренетĕн пулсан та санăн ăсу пачах та çук иккен. Ялан çапла хăвăнтан пĕчĕкреххисене кÿрентерме тăрăшатăн. Çиййĕнчен тата кулса тăратăн! Халь сана намăс та мар-и?

**Ваçук**. Ан култар-ха, Марук. Кирлех пулсан тытатăп та акă тепре перетĕп! Э-эх!..

**Марук.** Шарик! Çак путсĕр Ваçука атя, тăн кĕрт-ха! Вăсс! Вăсс ăна!

**Шарик.** Р-р-р, гав! Гав-гав-гав-гав-гав! Гав! Гав!

**Ваçук.** Кай кунтан! Ой-ой! Ан хăвала мана! Ан тĕкĕн! Ай-яй! Ан çырт мана, ан çырт тетĕп! Ыраттаратăн вĕт! Яр урана! Яр! Яр тетĕп! Ай-яй-яй-яй!

**Анюк.** Çав кирлĕ те сана, Ваçук! Ялан мана кÿрентеретĕн!

**Шарик.** Р-р-р-р!.. Гав-гав!

**Ваçук.** Ай-яй, ан çырт-ха! Марук, тархасшăн, чар йыттуна! Чар тетĕп!

**Марук.** Хăвăнтан пĕчĕкреххисене малашне татах та çапла кÿрентеретĕн-и?! Кала хăвăртрах!

**Шарик.** Р-р-р! Гав!

**Ваçук** (***макăрать***). Çук-çук-çук! Урăх пачах та кÿрентермĕп! Анюк, каçар!

**Марук.** Çитĕ, Шарик. Тепре çапла макăртас пулсан...

**Шарик**. Гав!

***Ваçук.*** Çук, çук! Урăх тĕкĕнмĕп тесе сăмах паратăп! Ай-яй, ку Шарик урана çыртса ыраттарчĕ, шăлавара çурса антарчĕ! Киле çитсен анне мана тем пек ятлать! Тарас кунтан хăвăртрах...

***Ваçук йĕлтĕрне тытать те килĕ еннелле уксахла-уксахла чупса каять. Ачасем ун çине тĕллесе кулаççĕ.***

**Шарик.** Гав!..

**Анюк.** Тавтапуç сана, Шарик, мана хÿтĕленĕшĕн.

**Марук.** Тинех эсĕ Ваçука явап тыттартăн. Урăх вăл нихăçан та никама та тивмĕ.

**Анюк.** Марук, тен, паянлăха ярăнса çитĕ, э?

**Марук.** Апла пулсан сыв пул, Анюк. Ыранччен.

**Шарик.** Ав-в!..

**Анюк.** Ыранччен!

***Йĕри-тавра тĕттĕмленсе каç пулать. Ачасем пурте килĕсене саланаççĕ. Марук çунашкине кил картине илсе кĕрсе крыльца çумне таянтарать. Унтан ăшă пÿрте хăвăрт чупса кĕрет. Унран Шарик те юлмасть. Вăл алăк çумĕнчи çемçе татăк çине выртать те шăп пулать.***

**Асанне.** Ай-яй, мăнукăм. Эсĕ вара йĕп-йĕпе пуличченех ярăнтăн-им? Шăнмарăн пулĕ те?

**Марук** (***кулать***). Ан култар-ха, асаннеçĕм, халь мана чăтма çук ăшă!



**Асатте.** Хăвăртрах тумтирна хыв та типĕтме кăмака çумне çакăпăр.

**Марук.** Ку юрлă алсише эпĕ тÿрех пичурккана чиксе хуратăп. Эх, эпир паян Анюкпа мĕн тери лайăх ярăнтăмăр!..

**Асанне.** Ку темĕн, ачам, хырăму та выçрĕ пулĕ-ха...

**Марук.** Чăнахах та, асанне, манăн çав тери çиес килет! (***Шăршласа пăхать***). Ой, чим-ха, эсĕ паян кукăль пĕçермерĕн пулĕ те? Тутлă шăршă кăларнă пек...

**Асатте.** Асаннÿ сана валли ятарласа палан кукли пĕçерчĕ.

**Марук**. Чăнах-и, асанне?!

**Асанне.** Чăнах пулмасăр. Халь кăна кăмакаран пиççе тухрĕ. Аллуна çу та аслаçупа пĕрле ларса çийĕр. Турилкке çине касса хурам-ха, кăшт та пулин сивĕнтĕр.

**Марук.** Алă çурăм, халь çиме те юрать. М... çав тери тутлă! Тавтапуçах, асанне, мĕн тери лайăх эсĕ. Эсĕ те, асатте, çав тери лайăх. Эпĕ сире питĕ, питĕ хытă юрататăп.

**Асанне.** Ах, çак Марук ытла та йăпăлтиçке. Çи, мăнукăм, çи. Чей акă, ытах та сивĕнсе кайиччен, атя, сыпса çи.

**Асатте.** Шарике те манас мар, кайса çитерем-ха. Марука тулта тимлĕ сыхланăшăн, ме, кунта шăмă çеç мар, какай татăкĕ те пур, çиех. Эсĕ пирĕн чи-чи шанчăклă хуралçă.

**Шарик** (***савăнса***). Ав-в!..

**Асанне.** Гошăпа Машунь паçăрах çисе тăранчĕç те ним пĕлми çывăраççĕ.

**Марук.** Хамăн та, асатте, ыйхă пуснипе куçăм хупăнмах пуçларĕ... (***Анаслать***). Тутлă кукăль çисе тăрантăм... Халь эпĕ сире пурне те ыра каç сунатăп...

**Асанне.** Атя, чĕвĕлти мăнукăм, хатĕр вырăн ăшне кĕрсе вырт та тутлă тĕлĕксем кур...

**Асатте.** Эпĕ те кăмака çине улăхса канам...

**Асанне.** Пурне те ырă каç...

**Шарик**. Ав-в!..

***Пурте лăпкăн çывăрса каяççĕ. Кантăк витĕр уйăх çути кĕнĕ-кĕмен тăрук Гоша вăранать. Пуçне унталла-кунталла çавăркаласа пăхса илет те кичеммĕн хаш! сывласа ярать.***

**Гоша.** Ах!... Никампа калаçма та çук... Машунь, Машунь тетĕп, эсĕ те пулин вăрансамччĕ...

**Машунь** (***шăппăн)***. Мяу. Гоша, шăп пулха. Пурте каннă чух хыттăн калаçса никама та вăратас марччĕ...

**Гоша.** Юрĕ, Машунь, ăнлантăм. Эпир санпа шăппăн кăна калаçăпăр.

**Машунь.** Эсĕ мĕн çинчен ыйтасшăнччĕ вара, мяу?

**Гоша.** Эпĕ-и?

**Машунь.** Эсĕ çав. Тата кам пултăр-ха, Шарик те çывăрать.

**Шарик** (***шăппăн***). Вăт пакăлтисем, çывăрма памаççĕ, гав.

**Гоша.** Каçарăр та, туссем, эпĕ паян пĕрремĕш хут тĕлĕк куртăм.

**Машуньпа Шарик**. Чăнах-и? Мĕн çинчен?

**Гоша.** Эпĕ... эпĕ... эпĕ кăнтăрти вăрмана вĕçсе кĕтĕм пек... Эх! Унта вара тĕлĕнмелле ăшă, пур çĕрте те чечексем юмахри пек илемлĕ çеçке çурса ырă шăршă кăлараççĕ пек... Тата... тата... тата ман пек попугайсем унта темĕн чухлех вĕçеççĕ пек...

**Машунь.** Унта та сан пек кайăк пурахшим тата? Мяу...

**Шарик.** Гав. Мана атте каласа панă тăрăх, сан пек чаплă йышши кайăксем шăп çав кăнтăрти асамлă вăрмансенче пурăнаççĕ те. Тепĕр майлă каласан сирĕн тăван çĕр-шыв кăнтăр пулать.

**Гоша.** Ч-ч-... Чăнах-и? Эпĕ кăна пĕрремĕш хут илтетĕп. Апла эпĕ... эпĕ кăнтăрти кайăк?..

**Машунь.** Вăт тĕлĕнтермĕш, мяу. Эсĕ, Гошенька, çав тери илемлĕ, чи-чи ăслă кайăк. Тата эсĕ çынсем хушшинче те çын чĕлхипе калаçма, тепĕр чух шÿтлĕн витлеме те пултаратăн...

**Шарик.** Эх, манăн та çапла хăш-пĕр чухне савăнсан е тарăхсан, çын пек калаçса ярас килет, анчах та çук, ниепле те пултараймастăп, гав.

**Машунь.** Санпа, ăслă кайăкпа туслă пулма эпир яланах хатĕр, мяу. Çапла-и, Шарик?

**Шарик.** Çапла пулмасăр, гав. Эпир санпа савăнатпăр та, мухтанатпăр та...

**Гоша.** Эсир... эсир... эсир мана шутсăр мухта-мухта ман халь сăмса та каçăрăлсах кайрĕ... Вăт... Анчах та эпĕ кунта мĕнле майпа лекнине манăн чăтма çук халь пĕлес килчĕ, туссем...

**Шарик.** Гав. Апла пулсан итле эппин. Пĕррехинче пĕчĕк Марукпа ашшĕ-амăшĕ тата эпĕ те хулари ярмăрккăна кайрăмăр. Унта хура ÿтлĕ кăнтăр çынни читлĕх йăтнă, нумай пулмасть тухнă чĕппе сутса çÿрет. Марук сана курнă-курман: «Юратнă аттеçĕмпе аннеçĕм, тархасшăн, мана çуралнă кун ячĕпе çак юмахри попугая илсе парсамăрччĕ. Эпă ăна Гоша тесе чĕнĕп...» – тесе ÿкĕтлеме тытăнчĕ. Эс ун чухне куçна хупнă, тĕлĕретĕн...

**Машунь.** Киле илсе килсен малтан сана эпĕ пач килĕштермерĕм, мяу. Эсĕ тăрук çын хыççăн юлашки сăмахне витлеме тытăнсан, эпĕ тĕлĕннипе виçĕ кун хушши мяуклатаймасăр, шыв сыпнă пек çÿрерĕм... Каярахпа вара сана çав тери хисеплеме тытăнтăм.

**Гоша.** Эсир... эсир... эсир халь маншăн чи-чи çывăх та чи хаклă туссем пултăр. Эх, савăннипе куççуль те тухрĕ... Марук вĕрентнĕ юлашки сăвва тăрук аса илес килсе кайрĕ...

**Машунь.** Мяу, мĕнрен пуçланаччĕ-ха вăл?

**Шарик.** Туслăх çинченччĕ пулас, гав.

**Гоша.** Аса илтĕм:
Туссем пулсан пурнас килет.

**Машунь.** Туссем пулсан выляс килет.

**Шарик.** Туссемсĕр пач кичем ытла –
**Пĕрле.** Пĕр савăнăç çук, тупата.
**Гоша.** Çак туслăхра мĕн пур ырри,
**Машунь.** Çак туслăх туринчен кирли.
**Шарик.** Пĕрне-пĕри тек пулăшар,
**Пĕрле.** Татах та çирĕп туслашар!

**Шарик.** Халь шăп пулса канăпăр, юрать-и?

**Гошăпа Машунь.** Юрать.

***Хĕллехи каникул хыççăн Марук малашне те тăрăшса вĕренет. Паян та акă шкултан тухнă-тухман килне çил пек вĕçтерсе çитет.***

**Марук.** Асатте! Асатте! Эпĕ паян икĕ «пиллĕк» илтĕм!

**Гоша.** Икĕ «пиллĕк»! Икĕ «пиллĕк»!

**Машунь.** Мяу!..

**Шарик.** Ав-в!..

**Асанне.** Çитрĕн те-им, пирĕн ăслă мăнукăмçăм? Яланхи пекех паян та савăнăçлă таврăнтăн.

**Асатте.** Икĕ «пиллĕк» паллă мĕнпе илтĕн-ха, Марук?

**Марук.** Сăвăшăн. Тата Валентина Николаевна эпир хĕллехи каникула мĕнле ирттерни çинчен пурсăмăртан та ыйтрĕ. Уншăн та мана, лайăх каласа кăтартнăшăн, тепĕр «пиллĕк» лартса пачĕ. Вăт.

**Асанне.** Маттур, ачам. Тăрăшса вĕренни сая каймасть.

**Асатте.** Сăввуна хăш вăхăтра вĕренме ĕлкĕртĕн вара? Пире те вуласа парсамччĕ, мăнукăм.

**Марук.** Хаваспах! Пурте итлĕр!
Юр çăвать, юр çăвать,
Çут çанталăк ыр курать.
Çул çинче юр пĕрчисем –
Выртаç тейĕн теттесем.
Кĕмĕл тĕслĕ курăнаç,
Хĕвелпе йăлтăртатаç.

**Асанне.** Ай, маттур та вара эсĕ.

**Гоша.** Маттур! Маттур!

**Машунь.** Мяу!

**Шарик.** Ав!

**Асатте.** Кĕç-вĕç акă шыва кĕртнин мешехи çитсе пырать. Вăл вăхăтра сивĕ пулаканччĕ. Сана валли, юратнă мăнукăм, тăвайккинчен ярăнмашкăн çăм атă туянтăм.

**Марук.** Ой, асатте! Мĕн тери çемçе те ăшă вăл. Тепле сивĕ тăрсан та манăн ура халь тулта пĕрре те шăнас çук. Тавтапуç сана, ырă асаттеçĕм.

**Асанне.** Халĕ вара сĕтел хушшине ларса апатланăпăр. Ан кулянăр, ачасем, апачĕ пурин валли те хатĕр.

**Марук.** Эпĕ апла пулсан малтан Гошăна, Машуньăна тата Шарике çитерсе тухам-ха.

**Гоша.** Тавтапуç! Тавтапуç!

**Машунь**. Мя-у!..

**Шарик**. Ав-в!..

**Асатте.** Эпĕ çăкăр касса хатĕрлĕп.

**Асанне**. Пурин те апачĕ тутлă пултăр.

***Çапла вара çакă ăшă та таса пÿртри пысăк кил-йыш тĕлĕнмелле туслă пурăнать. Çавăнпа та, тен, кунта пурне те питĕ лайăх. Аслашшĕпе асламăшне те, пĕчĕк туссене те, уйрăмах Марука. Мĕншĕн тесен вăл ытла та ырă кăмăллă пулнăран ăна пурте юратаççĕ.***

# Хаваслă 2014 самант

## Сăмах каçмăшсем



**Сылтăмалла:** 4. Хăшĕ-пĕри ăна ют алпа туртма юрататъ. 6. Йывăç пайĕ. 7. Хăлха çакки. 8. Пулас пÿрт. 11. Кăмака пайĕ. 12. Çĕр кавирĕ. 15. Уйăх ячĕ. 17. Ял та, поселок та мар. 18. Пуян çын хÿрешки. 19. Утă-улăм вырăнĕ.

**Аялалла:** 1. Вăл çĕнĕлле шăлатъ. 2. Килти мулкач. 3. Пĕчĕк вăрман. 5. Унпа вĕçеççĕ те, ишеççĕ те. 9. Шупашкара шăваракан юхан шыв. 10. Ăраскал. 13. Тинĕсри çĕр лаптăкĕ. 14. Пулас генерал. 16. Килти выльăх. 17. Çыран хĕрринчи йывăç.



**Сылтăмалла:** 4. Республикăри район. 7. Вăрманти чĕр чун. 8. Унран аслă пулма хушман. 9. Çĕр лаптăкĕ. 11. Суту-илÿ вырăнĕ. 12. Хуралтă. 13. Çурхи ĕçси. 15. Ăна тепĕр чухне ура хуçса та авкаланаççĕ. 17. Ял пайĕ. 18. В.Краснов-Асли çырнă хайлав.

**Аялалла:** 1. Уйри вĕçен кайăк. 2. Вăл тăварпа писнĕ. 3. Вĕри апат. 5. Нарт-нарт. 6. Пушă. 9. Пысăк попугай. 10. Унпа çăнăх çăвăраççĕ. 14. Унпа йĕп шыраса тупаймăн. 16. Тарăн мар. 17. Чăваш писателĕ.

*Çула тухнă чĕпĕсем*
*Пĕвене утаççĕ.*
*Хăй çулне çавах вĕсем*
*Шыраса тупаççĕ.*



**Сылтăмалла:** 4. Пахча çимĕç. 5. Урана тăхăнмалли хатĕр. 9. Пемелли япала. 11. Хваттере янă хурт-кăпшанкă. 12. Ăна пуçа тăхăнаççĕ. 13. Тинĕсри пулă. 15. Кăнтăрти йывăç. 16. Вылька апачĕ. 17. Кăнтăрла мар.

**Аялалла:** 1. Çурхи ĕç. 2. Çут çанталăк «ÿпки». 3. Вăл пилĕк авсан тухать. 6. Чăваш юрăçи. 7. Пушă. 8. Пушкăрт халăхĕн паттăрĕ – ...Юлаев. 10. Юн ĕмекен хурт-кăпшанкă. 14. Кĕрешÿ меслечĕ. 18. .. – утаман. 19. Пĕр-пĕр килĕшĕве çирĕплетсе çырнă хут.





**Çÿлтен сылтăмалла:** 1. Каппайчăк. 8. Чăлах. 4. Кĕвĕ хайлавĕ. 5. Кавказри юлташ. 7. Иçетрен тавçăракан. 8. Каучук тăванĕ. 10. Пысăк попугай. 11. Чăнлăх. 13. Мечĕк вăйăран тухса ÿкни. 15. Йĕтĕр (вырăсла). 17. Йытă ăрачĕ. 19. Вылькăх апачĕ. 21. Вырăс композиторĕ. 22. Нерв пайĕ.

**Çÿлтен сулахаялла: 2**. Наян. 3. Ун çăмарти сарă пулнă тет. 5. Чăваш поэчĕ. 6. Висе. 7. Кăвар туртмалли хатĕр. 9. Литвари хула. 10. Çурхи ĕç. 12. Сĕтел-пукан. 14. Килĕшĕве çирĕплетсе çырни. 16. Слива сорчĕ. 18. Темĕн тума та пултаракан. 20. Çĕрме пуян. 21. Вырăс писателĕ. 23. Авалхи грексен пухăвĕ.

***Николай КРАСНОВ** (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.***

# Юлташлăх

Исмай ИСЕМПЕК

«Çăкăр-тăвар пулсан пурнăç лайăх», – тетчĕ пирĕн анне. Çапах та ман ачалăха лайăх теме çукрахчĕ. Çăкăрĕ чăнах та çитместчĕ. Тыррине ĕç кунĕшĕн грампа валеçетчĕç. Çĕр улми, купăста, кишĕр, хăяр, помидор, пан улми тата сахалрах лекетчĕ хресчене.

Килти анкартинче çĕр çителĕклех пулнă-ха. Унта вара ял-йыш пĕтĕмпе тенĕ пекех çĕр улми лартатчĕ. Хăшĕпĕри кăштах урпа акатчĕ. Вăл вара сăра салачĕ тума каятчĕ. Анкарти çĕрĕ пулăшатчĕ ял халăхне. Унта тĕрлĕ пахча çимĕç йăранĕсем вырăн тупатчĕç.

Анчах çу каçипе çитĕнтернĕ çав çимĕçсем хĕл каçма çитместчĕç. Ирĕксĕрех вĕсене перекетлеме лекетчĕ. Апатланнă чухне анне: «Çăкăр тĕпренчĕкне çĕре ан ӳкерĕр», – тесе ялан асăрхаттаратчĕ. Ырашĕ сахал пулнăран çăнăхĕ те çителĕксĕрччĕ. Çăкăр пĕçерме вара вăл ыраш çăнăхне хыркăчпа хырнă çĕр улмипе хутăштарса чуста лартатчĕ.

Писнĕскере кăмакаран кăларсанах çиме тутлăччĕ-ха. Анчах анне пире ăшă çăкăр тухăçсăр тесе виçеллĕ кăна паратчĕ. Темиçе кун иртнĕ хыççăн çăкăрĕ кăшт йӳçĕ тутă калакан пулатчĕ. Çăкăр пĕтсен пашалу та тутлă тесе анне тата урпа, пăрçа пашалăвĕсем пĕçеретчĕ. Уявсенче хăпарту та леккелетчĕ пире.

Çуркунне юр кайса типме пуçласан пĕлтĕрхи çĕр улми уйĕнче тантăшсемпе çĕрнĕ тымар çимĕçĕн крахмалне ăмăртса пуçтараттăмăр. Анне ăна темиçе хут шывра çăватчĕ те типĕтетчĕ. Типнĕ крахмала сĕтпе вĕретсе кĕсел тăватчĕ. Çинĕ чухне вăл резинка пек тăсăлатчĕ. Кăшăкри кĕселне çăвара илсе çитерсен те чăшăкран татăлмастчĕ. Вара крахмал «сĕлекине» чашăк хĕрринчен çĕçĕпе касаттăмăр. Хырăма çавăн пек улталама тиветчĕ.

Сталин вилсен, хресченĕн те пурнăç утти хăйне май çăмăлланма пуçларĕ. Уйра пĕр-ик пучах татса илнĕшĕнех пилĕк çула тĕрмене хупас йĕрке пĕтрĕ пулмалла.

Пурнăç тилхепи пушанни мана Чурачăкри çăкăр пĕçермелли çуртри лару-тăру улшăннипе асра юлнă. Мĕншĕн? Эпир, ял ачисем, вун икĕ çухрăмри çак ял пекарнине çăкăр туянма çӳреттĕмĕр. Пĕр-ик çул каялла ун пек ырлăха ĕмĕтленме те пултарайман. Çăкăрне лавккара сутнă-ха, анчах унта черет тем тăршшĕ. Черет çитсен те сана сутуçă пĕр çăкăр анчах парать. Тата уншăн вун икĕ çухрăмри лавккана танккамалла кашни кун.

Пекарньăра пирĕн Лисук аппа ĕçлет. Вăл вара хĕрхенсе вăрттăн та пулин ытларах пама пултарать.

Пĕррехинче, кĕркунне, анне: «Çăкăр хырăм хыççăн чупмасть, хырăм çăкăр хыççăн танккать», – терĕ те мана ĕç хушрĕ.



– Аркаш пиччӳсем Чурачăка çăкăр илме каяççĕ, – тет. – Акă сана хутаç, çичĕ тенкĕ укça. Виçĕ буханкăлăх.

Эпĕ Чурачăка кайма хаваспах пуçтарăнтăм. Аркаш пиччесем патне Малтикаса çитрĕм. Унта тăватă ача пухăннă. Вĕсем манран пилĕк-ултă çул аслăрах. Эпĕ, тăххăрти шĕвĕркке, чи çамрăкки. Мана пĕрле илме хирĕç пулмарĕç.

– Уру хăвăн, – терĕ Аркаш пичче. – Анчах ас ту, ывăнтăм, ан васкăр-ха тесе нăйкăшса пырсан урăх нихăçан та илместпĕр. Ăнлантăн-и?

– Ăнлантăм.

Çула тухрăмăр. Пурин аллинче те шĕшкĕ туя. Манăн вара çук. «Йытăсем тапăнсан мĕнле хӳтĕленмелле-ха?» – тесе шухăшлатăп.

– Сана туя кирлĕ мар, – терĕ Аркаш пичче эпĕ ун çине кӳренчĕклĕ пăхсан. – Сана эртелпех хӳтĕлĕпĕр, ан хăра.

Чурачăка икĕ сехет ытла çуран таплаттартăмăр. Çитрĕмĕр пекарньăна, анчах пирĕн Лисук аппа çук. Вăл иккĕмĕш сменăра иккен.

Халĕ мана, пĕчĕкскере, «хӳтĕлевçĕсем» çăкăр пĕçерекен çурта хăварчĕç те хăйсем тухса утрĕç. Мĕн тăвăн – вĕсем аслисем. Те кино курма кайрĕç, те столовăйне чей ĕçме.

Вĕсем тухса кайни хăратмарĕ-ха. Пекарньăри хĕрарăмсем хăйсен кану пӳлĕмне илсе кĕчĕç те шурă çăкăрпа чей ĕçтерчĕç. Лисук аппана кĕтме хушрĕç.

Эпĕ те ĕшеннипе, те тутлă кулачпа пылак чей ĕçнипе сак çине тӳннĕ те çывăрса кайнă.

– Эй, ыйхă чăпти, вăран, – тет мана Аркаш пичче.

Сиксе тăтăм. Лисук аппа та, ачасем те пĕрле. Часах пекарня асамçи пирĕн ыйтусене туллин тивĕçтерчĕ.

Хутаçсене илтĕмĕр те урама тухрăмăр. Каç пулнă иккен. Тĕттĕм. Çапах утма пулать, куç вичкĕн-ха. Танккатпăр ялалла. Аслăраххисем малалла чавтараççĕ кăна. Юрă та юрлаççĕ, кулса та илеççĕ. Чурачăкран 5-6 çухрăм утсан, тахăшĕ «Кашкăрсем!» – тесе çухăрса ячĕ. Пăхатпăр, эпир пыракан çултан çур çухрăмра кашкăр кĕтĕвĕ юрта парать.

– Пиллĕкĕн, – терĕ Аркаш пичче. Умлăн-хыçлăн пыраçĕ. Вĕсем ĕмĕрех пĕр йĕрпе утаççĕ.

Ачасем хайхи пĕр хушă шăпах пулчĕç. Сывлани те илтĕнмест. Ара кашкăр курсан уксах йыттăн та ури тӳрленнĕ тет те. Хăраса ӳкрĕç курăнать. Эпĕ те мăннисем çумнерех йăпшăнатăп. Кашкăрсем çинчен нумай илтнĕ вĕт. Вĕсем ялсене вылăх-чĕрлĕх шыраса çӳренĕ: сурăххи-качаки, пăрушĕ-ĕни тукмаксемшĕн шăл çемми пулнă. Витесенченех тытса кайнă. Ĕлĕкрех кашамансем пирĕн тăрăхра пулманпа пĕрех тетчĕç аслисем. Хаяр вăрçă пуçлансанах çав кашамансем чăваш çĕрне те куçса килнĕ имĕш. Çынсене тапăнни те пулнă иккен.

Пирĕн шăпланнă ушкăн часах ахăрса кайрĕ. Хăшĕ кăшкăрать, çухăрать, тепри шăхăрать. Пурте тенĕ пекех шăрпăк чĕртсе çутатаççĕ. Çăкăр чĕркенĕ хаçатсене çунтараççĕ. Туйисемпе кашкăрсене хăмсараççĕ.

Мана ачасем хупăрласа илчĕç те:

– Эсĕ ан шиклен, – терĕç. – Хӳтĕлетпĕр сана!

Чун лаштах пулчĕ. Эпĕ вуланă та, илтнĕ те вăрçăра салтаксем юлташĕсене кĕлеткипе хупласа çăлнине. Хальхинче манпа та çаплах пулса тухрĕ. Юлташлăх вăйне эпĕ çав кун туйрăм вара.

Çуйхашсан-çуйхашсан кашкăрсем пирĕн енчен пăрăнчĕç те çул урлă каçса вăрман еннелле васкамасăр уттарчĕç.

# Виçĕ юр пĕрчи

Лера каçхи пĕлĕте сăнарĕ. Ах, мĕн тери илемлĕ-çке вăл! Юр пĕрчисем сывлăшра ташă ташласа йывăççем, пӳртсем, çĕр çине вĕçсе анса илем кӳреççĕ. Иртсе каякан çынсен калпакĕсемпе тумтирĕсем те шап-шурă. Юр пĕрчисем чĕрĕ тейĕн. Асамлă вĕсем. Пĕри тепринчен илемлĕрех.

– Мĕн çинчен ĕмĕтленетĕн? – юр пĕрчисем каланăн туйăнчĕ.

– Ĕмĕт? – ыйтрĕ Лера.

– Эпир, юр пĕрчисем, Çĕнĕ çул умĕн кашни çыннăн виçĕ ĕмĕтне пурнăçлама пултаратпăр. Алă çине ӳкнĕ пĕр юр пĕрчи ирĕлсе пĕтиччен эсĕ мĕн шутлани çăна çаврăнĕ, – хĕр пĕрчине хуравларĕç юр пĕрчисем.

– Кашни çын? – тĕлĕнчĕ хĕр ача. – Мĕншĕн вĕсем ĕмĕтленмеççĕ?

– Ара, пурте пире илтмеççĕ-çке! – пăшăлтатрĕç юр пĕрчисем.

– Эпĕ сире илтрĕм-çке...

– Пире ырă чунлă та ырă кăмăллисем çеç илтеççĕ. Мĕн çинчен ĕмĕтленен? – юр пĕрчисем Лера тавра çаврăнчĕç.

– Эпĕ мĕн çинчен ĕмĕтленме пултараятăп-ши? – ыйтрĕ хĕр ача.

– Кирек мĕн çинчен те, анчах юр пĕрчисем ирĕлсе кайиччен шутласа ĕлкĕрмелле!

Хĕр пĕрчин шутламалла та мар-çке. Вăл веçех пĕлет. Лера унчченех çуллахи каникулта ашшĕ-амăшĕпе тинĕс хĕррине кайса курма ĕмĕтленет. Вăл нихăçан та тинĕс хĕррине пулса курман. Унсăр пуçне пĕчĕкскер садике кайнă чухне пĕр лавкка сентри çинче илемлĕ кĕпе тăхăнтартнă пуканене курнă. Ăна та илес килет унăн. Чи кирли вара – коньки. Лера пăр çинче ярăнма вĕренесшĕн.

– Эсĕ хатĕр-и? – ыйтрĕç юр пĕрчисем. – Юр çăвать, часрах ĕлкĕрмелле.

– Хатĕр-çке, – хуравларĕ Лера.

Вăл аллине çӳлелле тăсрĕ. Унччен те пулмасть ун çине юр пĕрчи ӳкрĕ. Лера тинĕс хĕррине каясси пирки ыйтасшăнччĕ çеç – кӳршĕ çуртра пурăнакан Коля пирки аса илчĕ. Арçын ача ялан чирлет, çавăнпа шкула та çӳремест, больницăра выртать.

– Коля чĕрĕлтĕр! – юр пĕрчи ирĕлсе кайиччен кăшкăрчĕ Лера.

Тинĕс хĕррине çак çулта каймасан та тепринче çитсе курма пулать. Часах Коля чĕрĕлĕ! Хĕр ача каллех аллине тăсрĕ, куç умне лавккари пукане тухса тăчĕ. Акă иккĕмĕш юр пĕрчи вĕçсе анчĕ. Лера пукане пирки каласшăнччĕ çеç...

– Асаннен куçĕсем начар курма пăрахчăр! – терĕ.

Юр пĕрчи шыв тумламĕ пулса тăчĕ. Хĕр пĕрчи вара асламăшĕ пирки аса илчĕ. Юлашки уйăхсенче унăн куçĕ- сем хавшанине пула ватă çын начар куратчĕ. Тухтăрсем те нимĕн тăваймарĕç. Куçсем курмасан асанне ăшă нуски-алса та çыхса параймасть, кĕнеке те вулаймасть, хăй тĕллĕн пӳртрен те тухаймасть. Асламăшĕн куçĕсем пирки шутланăшăн пĕртте пăшăрханмарĕ Лера. Юр пĕрчисем тепĕр ĕмĕте пурнăçлĕç, хальхинче вăл коньки пирки калĕ.

– Виççĕмĕш ĕмĕт...

Лера аллине тăсрĕ, çав хушăрах тепĕр юр пĕрчи сывлăшра çаврăнса ăшă алă çине ӳкрĕ. Хĕр ача коньки пирки шутласа илчĕ çеç – урамра шурă йытă çури чупса çӳренине курчĕ. Сивĕ çантăлăка пула чĕтрет хăй. Мĕскĕн. Лера унăн хуçи çуккине ăнланчĕ.

– Йытă çурин пурăнмалли кĕтес пултăрччĕ, – хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ хĕр ача.

Нумай вăхăт та иртмерĕ çын сасси илтĕнчĕ. Йытă çури патне хĕрарăмпа пĕчĕк арçын ача утса пычĕç.

– Анне, анне, пăх-ха, йытă çури! – кăшкăрса ячĕ ывăлĕ.

– Ай-уй, шăнса кайнă, – хĕрарăм çурана аллине илчĕ.

– Эпир ăна мĕн ятлă парăпăр? Шурик! Аннем, унăн пĕр хура пăнчă та çук-çке, – кăшкăрчĕ арçын ача.

– Чăн та Шурик, – ывăлĕпе килĕшрĕ амăшĕ.

– Анне, йытă çурине пĕрле илетпĕр-и? Вăл урамра шăнĕ.

– Илетпĕр, – йăл кулчĕ хĕрарăм. – Эпир унччченех йытă пирки ĕмĕтленнĕччĕ.

Амăшĕпе ывăлĕ йытă çурине илсе малалла утрĕç. Лерăн чунĕ савăнчĕ!

– Эсĕ хăвăн валли нимĕн те ĕмĕтленмерĕн-çке, – пăшăлтатрĕç юр пĕрчисем.

– Ыттисен ĕмĕчĕсем пĕлтерĕшлĕрех пулчĕç, – хуравларĕ хĕр ача.

Амăшĕн сасси илтĕнчĕ.

– Хĕрĕм, чăрăш айне кайса пăх-ха, унта Хĕл Мучи сан валли парне хăварнă.



– Аннеçĕм, эсĕ виçĕ ĕмĕт пирки илтнĕ-и?

– Çук. Эсĕ кун пирки мана кайран каласа парăн, халĕ чăрăш патне васка.

Лера урăх пӳлĕме утрĕ. Чăн та, чăрăш айĕнче парнесем выртаççĕ. Акă, амăшĕ валли тутлă шăршлă духи, ашшĕ валли – кĕнеке. Лера валли вара – коньки. Хĕр ача ĕмĕчĕ пурнăçланнине ĕненмерĕ. Вăл часрах чӳрече патне чупса кайрĕ те ăна уçса ячĕ.

– Юр пĕрчисем, эпĕ сире коньки пирки каламарăм-çке! Мĕншĕн çапла пулса тухрĕ? – кăшкăрчĕ вăл.

– Кун пекки пулать. Ырă чунлисем ыррине тивĕç! – хуравларĕç юр пĕрчисем.

*Вырăсларан Ирина КОШКИНА куçарнă.*




### Кăрлач – Январь

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
| 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 |
| 13 | 14 | 15 | 16 | 17 | 18 | 19 |
| 20 | 21 | 22 | 23 | 24 | 25 | 26 |
| 27 | 28 | 29 | 30 | 31 | | |

### Нарăс – Февраль

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | 1 | 2 |
| 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 |
| 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 | 16 |
| 17 | 18 | 19 | 20 | 21 | 22 | 23 |
| 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | | |

### Пуш – Март

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | 1 | 2 |
| 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 |
| 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 | 16 |
| 17 | 18 | 19 | 20 | 21 | 22 | 23 |
| 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | 29 | 30 |
| 31 | | | | | | |

### Ака – Апрель

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 |
| 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 |
| 14 | 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 |
| 21 | 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 |
| 28 | 29 | 30 | | | | |

### Çу – Май

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | 1 | 2 | 3 | 4 |
| 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 |
| 12 | 13 | 14 | 15 | 16 | 17 | 18 |
| 19 | 20 | 21 | 22 | 23 | 24 | 25 |
| 26 | 27 | 28 | 29 | 30 | 31 | |

### Çĕртме – Июнь

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | 1 |
| 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 |
| 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 |
| 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 | 22 |
| 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | 29 |
| 30 | | | | | | |

### Утă – Июль

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 |
| 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 |
| 14 | 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 |
| 21 | 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 |
| 28 | 29 | 30 | 31 | | | |

### Çурла – Август

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | 1 | 2 | 3 |
| 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 |
| 11 | 12 | 13 | 14 | 15 | 16 | 17 |
| 18 | 19 | 20 | 21 | 22 | 23 | 24 |
| 25 | 26 | 27 | 28 | 29 | 30 | 31 |

### Авăн – Сентябрь

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 |
| 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 |
| 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 |
| 29 | 30 | | | | | |

### Юпа – Октябрь

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
| 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 |
| 13 | 14 | 15 | 16 | 17 | 18 | 19 |
| 20 | 21 | 22 | 23 | 24 | 25 | 26 |
| 27 | 28 | 29 | 30 | 31 | | |

### Чӳк – Ноябрь

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | 1 | 2 |
| 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 |
| 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 | 16 |
| 17 | 18 | 19 | 20 | 21 | 22 | 23 |
| 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | 29 | 30 |

### Раштав – Декабрь

| Тн | Ыт | Юн | Кç | Эр | Шм | Вр |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 |
| 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 |
| 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 |
| 29 | 30 | 31 | | | | |